# Раççей Президенчĕ Владимир Путин Федераци Пухăвне черетлĕ Çырупа тухрĕ ● 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

48(918) №, 2015, раштав/декабрь, 5

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Михаил Бабич Чăваш Ен йнтăлса ĕçленине палăртнă 3 стр.
●Чирлĕ сурăха мĕнле пулăшмалла? Пўртрех чăрăш ўстеретпĕр 8 стр.
●Кинĕпе хунямăшĕ арçын пайлаймаççĕ 9 стр.
●Упăшка мĕнле шырамалла? 11 стр.

ÇĂЛТĂР ÇЎПÇИ

## Кĕвĕçў те вăрçтарать



Михаил ФЕДОРОВ, юрăç

– Концертсемпе тĕрлĕ яла-хулана тухса çўренĕ май: «Сирĕн пурнăç лайăх. Юрласа çеç çўретĕр», – текенсем час-часах тĕл пулаççĕ. «Чăнласах аван», – хуравлатăп та кулсах яраççĕ хайхисем. Пурнăçа хурлама сăлтав вара чăнахах та çук. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Юратнă ĕç пур – халăха савăнăç кўрес тесе çўретпĕр, куракансемпе пĕрле хамăр та хăпартланатпăр. Ĕç хыççăн киле каяс килет. Ку та телей. Мăшăрпа 23 çул килĕштерсе пурăнатпăр, ывăлпа хĕр ўстертĕмĕр. Килте çутă, хăтлă пулни кирлĕ çынна. Ку вара пĕтĕмпех хамăртан килет. Кил ăшшине хĕрарăмăн упрамалла тетпĕр пулин те арçыннăн та ăна пулăшса, тĕрев парса пымалла. Çемьери телейшĕн пĕчченшерĕн мар, иккĕн тăрăшмалла.

Шел, чылай упăшкипе арăмĕ çак тивĕçе пурнăçлаймаççĕ – çемьене сыхлаймаççĕ. Уйрăлса кайни тепĕр чухне арçыннăн укçа ĕçлесе илме аякри хуласене çўреме тивнипе те çыхăннă. Юнашар килĕштерсе пурăнас вырăнне уйрăмшар кун кунлама тивет, çакă та пĕр-пĕринчен сивĕтет. Кĕвĕçў туйăмĕ те ярса илет, вăл та вăрçтарать. Теприн çемйине хăварса, тен, каяс та килмест пулĕ, анчах пурнăç хистет. Мул пухма урăхла май çук тăк мĕн тăвăн-ха?

Телее, пирĕн çемьере пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Концертсенче çынна ырă туни хамăра та телей кўрет. Чылай чухне кинемейсем пыраççĕ те кăмăлне уçнишĕн тав тăваççĕ. Пурнăçри тĕрлĕ ыйту канăç паманран куляннăран килĕнчен тухса çўреме пăрахнине пĕлтереççĕ. Шăпах кулленхи йывăрлăхсем нумайран, татса паман çивĕч ыйту чылайран халăх концерт-театра сайра çўрет, килĕнче пусăрăнса ларать. Кун пек чухне çакна манмалла мар: пĕлĕштантăшпа курса калаçни, пачах тепĕр май, чуна уçать. Апла пулсан килте хупăнса лармалла мар.

Чуна ырттараканни манăн та пур-ха. Чăваш ялĕсенчех ашшĕ-амăшĕ ачисемпе вырăсла калаçать. Хамăрăн чĕлхене епле вĕрентмелле мар? Ывăл-хĕре тăван чĕлхерен уйăрмалла марах.

### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 05.12 | – 1 | + 1 |
| 06.12 | + 1 | + 2 |
| 07.12 | + 3 | + 2 |
| 08.12 | + 1 | 0 |
| 09.12 | 0 | + 1 |
| 10.12 | + 1 | – 2 |
| 11.12 | – 1 | – 3 |




# Шупашкар хĕрĕ – Кипрта

Республикăн тĕп хулинчи Аш-какай комбиначĕн тăкăрлăкĕнче пурăнакансем – «Чăваш хĕрарăмĕшĕн» ют çынсем мар. Вĕсен кун-çулĕпе, шăпипе тахçантанпах кăсăкланатпăр. Хальхинче çакăнти Светлана Борисова «Пятница» каналпа кăтартакан «Барышня-крестьянка» кăларăма хутшăннине пĕлтĕмĕр.

Ăна иртнĕ эрнере кăтартрĕç. Кипрти Пафос хулинче канни, паллах – унпа тĕл пулмалли сăлтав. Шоу вăхăтĕнче улпут тата хресчен хĕрĕсем 3 кунлăха хăйсен пурнăçĕпе ылмашăнаççĕ. Ентеш ют çĕршыв илемĕпе киленнĕ вăхăтра «Йăл кулă тĕнче мисĕ» титул çĕнсе илнĕ Катерина Шарова Чăваш Республикине килсе тухрĕ. Вăл пирĕн тăрăхра – пĕрремĕш хут. Хăй каланă тăрăх – ялта та пулса курман.

Раççей почтин кашни уйрăмĕнче “Хыпарпа” унăн кăларăмĕсене раштав уйăхĕн **3-12-мĕшĕнче ЙЎНĔ ХАКПА** çырăнтараççĕ

**“ХЫПАР” (индексĕ Д4800) – 570,30 тенкĕ**
**“ХЫПАР-эрнекун” (индексĕ Д8353) – 297,84 тенкĕ**
***“ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ” (индексĕ Д1515) – 316,50 тенкĕ***



# Владимир ПУТИН: Ăнăçу пулатех!

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин ĕнер Федераци Пухăвĕн ячĕпе çыракан çулленхи Çырупа паллаштарчĕ. Хăйĕн сăмахне Владимир Путин терроризм хăрушлăхĕпе çыхăннă темăран, террористсене пула пурнăçĕ татăлнă салтаксене, Раççей гражданĕсене асăнса пĕр минут шăп тăма ыйтнинчен пуçларĕ.**



## Терроризм çинчен

Раççей тахçантанпах террора хирĕç кĕрешĕвĕн малти рубежĕнче. Эпир çĕршывсен хушшинчи терроризм мĕнне пĕлетпĕр. Буденовскри, Бесланри, Мускаври, ытти çĕрти теракстсем пин-пин çын пурнăçне татнă. Çак хуйхă яланах пирĕн чĕрере.

Хурахсен ĕнсине хуçма вунă çула яхăн кирлĕ пулчĕ. Эпир террористсене Раççейрен хĕссе кăларма пултартăмăр, анчах вĕсен юлашкисемпе паян кунчченех кĕрешме тивет. Тĕнче шайĕнчи терроризма пĕр çĕршыв вăйĕпе кăна çĕнтерме çук. Терроризм хăрушлăхĕ ӳссех пырать. Афганистанри çивĕчлĕхе те сирмен, çав вăхăтрах Ирак, Ливи, Сири арпашупа анархи зонине çаврăнчĕç. Хăйсене килĕшмен режимсене камсем тĕп тăвас тенине пĕлетпĕр. Мĕн пулса тухрĕ-ха? Патшалăх тытăмне аркатрĕç, çынсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе ячĕç, çапла майпа радикалсем, экстремистсем, террористсем валли çул уçрĕç.

Сирире капланнă боевиксем пирĕншĕн пушшех хăрушă. Вĕсен ретĕнче Раççейрен, НППП çĕршывĕсенчен тухнă çын та сахал мар. Вĕсене укçа, хĕçпăшал параççĕ – вăй пухаççĕ. Унта çĕнтерчĕç-тĕк пирĕн пата та килĕç, сирпĕтме-вĕлерме пуçлĕç. Пирĕн вĕсене унтах тĕп тумалла. Акă мĕншĕн Сири влаçĕсем ыйтнипе унта çар операцийĕ ирттерме йышăнтăмăр. Сирире пирĕн Хĕç-пăшаллă Вăйсем чи малтанах Раççейшĕн çапăçаççĕ, пирĕн граждансен хăрушсăрлăхне хӳтĕлеççĕ.

Турккăсем – ырă, ĕçчен халăх. Вĕсен пĕлмелле: эпир туркă халăхне тата паян ертӳçĕсен йышĕнчи хăш-пĕр çынна, Сирире пирĕн çар служащийĕсем вилнĕшĕн яваплăскерсене, пĕр шая лартмастпăр. Сутăнчăклăх – чи намăс пулăм. Пирĕн летчиксене çурăмран перекенсем çакна пĕлсе тăччăр. Вĕсем куншăн пĕрре кăна мар ӳкĕнĕç-ха. Эпир мĕн тумаллине пĕлетпĕр.

## Коррупци çинчен

Килес çул Патшалăх Думин суйлавĕ иртет. Суйлав умĕнхи конкуренци тӳрĕ кăмăллă тата уçă, саккунпа килĕшӳллĕ пулмалла. Ман шутпа, кандидатсен программисенче коррупципе кĕрешес ыйтусем тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Коррупци – Раççей аталанăвне ура хуракан чăрмав.

Паян чиновниксем, судьясем, право хуралĕн ĕçченĕсем, мĕнпур шайри депутатсем хăйсен тупăшĕсемпе тăкакĕсем, пурлăхĕ çинчен деклараци пама тивĕç. Малашне вара патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем хăйсен тăванĕсен, тусĕсен тата çывăх çыннисен фирмисемпе тума палăртакан контрактсем, подрядсем çинчен калакан информацие те уçмалла.

Паян суда çитекен кашни иккĕмĕш уголовлă ĕç вак-тĕвек преступленипе çыхăннă, çынсем, çав шутра çамрăксем тĕрмене лекеççĕ. Хăрушă мар хăш-пĕр преступление административлă тĕслĕхсен шутне кĕртмелле, анчах çын иккĕмĕш хут çапла тунине уголовлă майпа хакламалла.

## Экономика çинчен

Иртнĕ çул экономикăра пысăк чăрмавсем тухса тăчĕç.

Лару-тăру чăннипех çивĕч, анчах – хăрушă мар. Ырă туртăмсем палăраççĕ те ĕнтĕ. Промышленноç производстви, наци валютин курсĕ тĕлĕшпе тĕпрен илсен тăнăçлăх йĕркеленчĕ, инфляци чакать.

Ыйтăмсем предпринимательсем тĕрĕслев тата надзор ведомствисен ĕçĕнче ырă улшăнусем курманнине çирĕплетеççĕ. Кун пирки мĕн чухлĕ каланă ĕнтĕ, полномочисене чакаратпăр. Анчах хăш-пĕр çĕрте вĕсем каллех пысăкланаççĕ. Контролерсен пысăк çарĕ тӳрĕ кăмăллă бизнеса ĕçлеме çав-çавах чăрмантарать.

## Бизнес çинчен

Пĕлтĕр следстви органĕсем экономикăпа çыхăннă 200 пине яхăн уголовлă ĕç пуçарнă. Суда 46 пинĕ кăна çитнĕ, тата 15 пинĕ судра пĕтнĕ. Çапла вара çак ĕçсен 15% кăна приговорпа вĕçленнĕ. Эппин, нумай предприниматель сăлтавсăрах хăйсен бизнесĕсĕр юлнă – вĕсене хĕстернĕ, тустарнă, ирĕке янă. Следстви органĕсен ку енĕпе тимлĕ пулмалла. Прокуратурăн следстви пахалăхне тĕрĕслесе тăмалли инструментсемпе анлăрах усă курмалла. Экономикăпа çыхăннă ĕçсене тĕпченĕ чухне çынна хупса хурассипе сайрарах усă курмалла, салук, килти арест мелĕсем вырăнлăрах.

Импорта хамăрăн продукципе улăштармалли проектсене укçа хывма хатĕр инвесторсем валли илĕртӳллĕ майсем сĕнетпĕр. Çакна ятарлă инвестици контракчĕ текен механизмпа çирĕплетнĕ. Çакнашкал контрактсемпе килĕшӳллĕн регионсене тупăшран илекен налук виçине нуль таран пĕчĕклетмелли право памашкăн сĕнетĕп.

## Ял хуçалăхĕ çинчен

Малалла утсан ăнăçу пулатех. Çакăн тĕслĕхĕ – пирĕн ял хуçалăхĕ. Вунă çул каялла кăнаха апат-çимĕçĕн çуррине чикĕ леш енчен кӳреттĕмĕр, импорта парăннăччĕ. Халь вара Раççей – экспортерсен шутĕнче.

2020 çул тĕлне шалти рынока хамăр çĕршывра туса илекен апат-çимĕçпе туллин тивĕçтерессине наци шайĕнчи тĕллев вырăнне палăртмалла тесе шухăшлатăп. Çĕр, шыв, ресурссен пуянлăхне кура эпир хамăра тăрантарма пултаратпăр кăна мар, тĕнчери экологи тĕлĕшĕнчен таса та паха апат-çимĕçпе тивĕçтерекен пысăк çĕршыв пулса тăраятпăр.

## Ĕçтешлĕх çинчен

Пирĕн чикĕ леш енчи ĕçтешсемпе çирĕп çыхăну йĕркелемелле, эпир Раççей рынокне вăрахлăха килекен инвесторсене хапăл тăватпăр. Еврази экономика союзĕн шайĕнче пĕр-пĕринпе тачă çыхăну тытса ĕçлессине çĕнĕ шая çĕклерĕмĕр. Çитес çул Сочире Раççей-АСЕАН саммитне ирттеретпĕр.

Транспорт инфратытăмне çĕнетес енĕпе малалла ĕçлĕпĕр. Азипе Хура тинĕс, Мурманск транспорт узелĕсене, Балтикăри, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи портсене аталантарăпăр, Патшалăх Канашĕн çитес ларăвĕсенчен пĕринче шалти юханшыв çулĕсен ыйтăвне тĕплĕн сӳтсе явăпăр.

## Сывлăх сыхлавĕ çинчен

Раççейре виççĕмĕш çул ĕнтĕ халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳссе пынине шута илетпĕр. Ӳсĕм, чăн та, пысăк мар, анчах вăл пур. Прогнозсем тăрăх пирĕн çĕнĕ «демографи шăтăкне» ӳкмеллеччĕ, анчах апла пулмарĕ. Чи малтанах çакă тин çуралнă пепкесен çурри çемьесенчи иккĕмĕш, виççĕмĕш тата вĕсен хыççăнхи ачасем пулнипе сăлтавланнă. Çемьесем ытларах ача çуратса ӳстересшĕн, патшалăх пулăшасса шанаççĕ.

Çитес çул амăшĕн капиталĕн программи вĕçленет. Унпа 6,5 млн ытла çемье усă курнă. Анчах çакă демографи суранне сиплеме çителĕксĕррине ăнланатпăр. Ку бюджетшăн çăмăл пулмĕ – пысăк укçа. Апла пулин те амăшĕн капиталĕн программине сахалтан та икĕ çуллăха тăсмалла тесе шутлатăп.

Демографи политикин пысăк пĕлтерĕшлĕ мерисенчен пĕри – шкулччĕнхи вĕрентĕве аталантарасси. Юлашки виçĕ çулта ача сачĕсенче 800 пине яхăн хушма вырăн уçнă. Çапах уйрăм çемьесемшĕн пепкисене садиксене вырнаçтарас енĕпе чăрмавсем пур-ха. Правительствăран, регионсен ертӳçисенчен ку енĕпе тимлĕ пулма ыйтатăп.

Пирĕн сывлăх сыхлавĕнчи политикăн тĕп кăтартăвĕ – çынсен пурнăçĕн тăршшĕ ӳсни. Вунă çулта вăл пилĕк çул ытла хушăнчĕ, кăçал, малтанлăха палăртнă тăрăх, 71 çултан иртет. Çапах çивĕч ыйтусем пур-ха.

«Сывлăх» нацпроектпа килĕшӳллĕн васкавлă медпулăшу валли çĕнĕ йышши нумай реанимобиль, ытти техника туянтăмăр. Анчах вунă çул иртрĕ, автопарка çĕнетмелле. Ку – федераци субъекчĕсен яваплăхĕ, резервсем тупмалла.

Вунă çул каялла калаçса татăлнине лайăх астăватăп: эпир федераци укçине хывăпăр, кайран вара регионсен ĕç-пуçа тивĕçлĕ шайра тытса тăмалла. Шел, ку тӳрре тухмарĕ. Çынсем чылай чухне вăл е ку больницăсем, шкулсем, культура центрĕсем хупăннине, темиçерен пĕрре тунине ăнланмаççĕ, çакăншăн ӳпкелеççĕ. Акă мĕншĕн питĕ асăрханса мерăсем йышăнмалла, тивĕçлĕ кăтартусене пурнăçламашкăн ялти ФАПа хупни чи лайăх мел мар. Хальлĕхе вара çапла тунине куратпăр. Кайран çынсен медпулăшу илме 100 километр инçĕшне çӳреме тивет.

Çуллен шкул ачисен шучĕ ӳссе пырать, çитес вунă çулта вĕсен шучĕ 3,5 млн та иртĕ. Ку питĕ лайăх, анчах çак ӳсĕм вĕрентӳ пахалăхне япăх витĕм ан кӳтĕр, паянхи шая татах та çĕклемелле.

Анчах лайăх пĕлӳ илме хătлă шкул çеç çителĕксĕр. Вĕрентекенсем çине тăрса ĕçлени кирлĕ, пултарулăха аталантармалли майсем йĕркелемелле. Унчченхи пионерсен керменĕсенче, тĕрлĕ кружокра лайăххи мĕн пулнă – çавăнпа та усă курмалла.

Пирĕн малашнехи аталану çулне суйламалли самантсем пĕрре кăна мар пулнă. Черетлĕ чикĕ урлă 2014 çулта каçрăмăр – Крымпа Севастополь Раççейпе пĕрлешрĕç. Раççей аслă çĕршыв пулнине çирĕп сасăпа пĕлтерчĕ. Паян та çапла çирĕппĕн ĕçлетпĕр. Малалла утăпăр, пĕрле ăнăçу тăватпăр.

## ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ – ПРЕЗИДЕНТ ÇЫРĂВĔ ПИРКИ



**Валентина ТЕЛЛИНА, РФ Президенчĕн В.Путинăн шаннă çынни:**

– Владимир Путин Федераци Пухăвне çырнă Çыру килĕшрĕ. Ăна паянхи лару-тăрăва шута илсе хатĕрленĕ. Пуçламăшĕнчех террористсене пула вăхăтсăр вилнĕ салтаксене асăнса шăп тăни, вĕсен ашшĕ-амăшне хисеплесе сăмах калани пушшех кăмăла кайрĕ. Хĕрарăм-çке эпир, аннесем. Экономика çинчен калаçнă чухне те ятарлă çирĕп хушусем пачĕ.

Пурнăçăм сывлăх сыхлавĕпе çыхăннă май мана çак тытăмри çĕнĕлĕхсем кăсăклантарчĕç. Çитес çултан Раççейĕн сывлăх сыхлавĕ туллин страховани принципĕсем çине куçасса ырласа кăна йышăнмалла. Пĕр ял та фельдшерпа акушер пункчĕсĕр юлмалла маррипе те килĕшетĕп. Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсене пĕрлештерессине те çав тери асăрханса пурнăçламалла терĕ Владимир Путин. Ку е вăл тăрăхра мĕнле учреждени пулмалли çинчен килес çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен сĕнӳсем хатĕрлеме хушрĕ.

Амăшĕн капиталне тата икĕ çула тăсассине те хăпартланса йышăнтăм. Çакă çемьесемшĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çырăвăн кашни сăмахнех тимлĕн итлерĕм. Раççей хăватлă çĕршыв пулнишĕн савăнтăм. Владимир Путин тĕнче шайĕнчи лидерсен йышĕнче пулнишĕн те хĕпĕртерĕм. Унăн шаннă çынни пулма тӳр килни маншăн – пысăк чыс.



**Петр МИШИН, Шупашкарти строительство тата хула хуçалăх техникумĕн пуçлăхĕ, техника наукисен докторĕ:**

– Терроризма, коррупцие хирĕç кĕрешмелли çинчен çирĕп калани килĕшрĕ. Пире аталанмашкăн ура хуракан чăрмавсенчен хăтăлмалла.

Амăшĕн капиталĕн программине сахалтан та икĕ çуллăха тăсма палăртнине алă çупсах йышăнтăм. Пирĕн ĕçре те умлăхыçлă 3 ача çуратакан специалистсем пур. Тĕпренчĕке çын тума патшалăх пулăшăвĕ кирлĕ.

Çĕршыв тилхепи – шанчăклă алăра. Çакна Владимир Путинăн черетлĕ Çырăвĕ тепĕр хут çирĕплетрĕ. Раççей аталанса пыни пире савăнтарать, хавхалантарать.

ХӲТЛĔХ

# Тунсăхлама памаççĕ

Ашшĕ-амăшĕ ăна пуçламăш классенче вĕреннĕ чухне хĕлле шкула çунапа, кĕрлĕ-çурлă вăхăтра велосипедпа леçнĕ. Ачан сывлăхĕ хавшанине кура сусăрскере килте вĕрентме тытăннă. Çурăм шăммин шыççи аталансах пынăран ача ури çине пачах та пусайман, упаленме те вăйĕ пулман. Пĕчĕккĕллех икĕ операци витĕр тухнă вăл. Пĕрремĕшĕ хыççăн пăртак лайăхланни палăрнă, анчах та иккĕмĕшĕ шанчăк кӳмен, ача хăйне тата япăххах туйма тытăннă. Тухтăрсем унăн сывлăхĕпе кăсăкланса тăраççĕ. Кĕçех инвалид кӳми кӳрсе парасси пирки калаçрĕç ашшĕпе амăшĕ. Пĕчĕк чухне вара арçын ача чиперех утнă-мĕн, велосипедпа та ярăннă, урама выляма тухнă.

Владислав Егоров Канаш районĕнчи Катек вăтам шкулĕнче улттăмĕш класра вĕренет. Учительсем ун патне кашни кунах киле çӳреççĕ. «4» тата «5» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пыракан арçын ача Александр Пушкин юмахĕсене вулама юратать, сăввисене пăхмасăр вĕренет. Пуринчен ытла математика предметне кăмăллать, кăткăс задачăсем шутлама юратать. Çурăм шăммин шыççи аталанăран ура çине тăрайманскер ăс-тăн енчен урамра чупакан ытти ачаран нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Шăрçа пекех хитре те яка çырать. Владикĕн типтерлĕ тетрачĕсене кĕçĕн класра вĕреннĕ чухне шкул ачисене те кайса кăтартнă вĕрентекен. Лайăх паллăсемлĕ дневникне хăй те уçса кăтартма вăтанмарĕ. Киле панă ĕçсене тĕплĕн, тирпейлĕ çырса пынинченех вăл чăннипех те тарăн пĕлӳ илме тă-



рăшни палăрать. Лайăх пурăнасчĕ тесе ырми-канми тăрăшакан, картиш тулли выльăх тытакан ашшĕпе амăшне пĕчĕк шăллĕне Егора пăхса пулăшать, тĕрлĕ юмах вуласа парать. Чи килĕшекен учитель кам тесе ыйтсан: «Пурте лайăх», – çакнашкал ăслă хурав пачĕ арçын ача.

ЧР Пуçлăхĕн суйлавĕ умĕн Катекри вĕрентекенсем Егоровсем патне çитнĕ. «Хальлĕхе кама суйлассине пĕлместĕп-ха, пăртак иккĕленсе тăратăп», – тенĕ амăшĕ Светлана Фомична. «Паллах, Игнатьевшăн, урăх тата камшăн?» – сывăх çынни вырăнне хуравланă тавçăруллă арçын ача.

Пушă вăхăтра Владик шашка-шахматла, доминолла выляма юратать, тус-тантăшĕпе социаллă сетьре хутшăнать.

Катексем Владике пĕртте тунсăхлама памаççĕ, уроксем хыççăн класĕпех çӳреме кăмăлласçĕ ун патне. Çуралнă кунĕнче, Çĕнĕ çулта, Нарăсăн 23-мĕшĕнче тата Пĕлӳ кунĕнче парнесемпе савăнтараççĕ. Пĕрле хитре юрăсем юрланă, пылак çимĕçпе, амăшĕ пĕçернĕ тутлă кукăльсемпе чей ĕçнĕ хыççăн Владикĕн те кăмăлĕ çĕкленет. «Питĕ туслă та маттур пирĕн улттăмĕшсем. Пĕррехинче вĕсем урамра хăмпăсем йăтса утнине асăрхарăм. Ăçта кайма пуçтарăннине ыйтсан: «Владик патне», – харăссăн кăшкăраççĕ хайхисем», – каласа кăтартать шкул директорĕн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Наталья Семенова.

Нумаях пулмасть улттăмĕшсем Владик валли парне ыйтса Хĕл Мучи патне çыру янă. Çĕнĕ çула тем пекех кĕтеççĕ арçын ачасемпе хĕрачасем. Хăйсен ку çулти чи пысăк çутă ĕмĕчĕ пурнăçланасса шанаççĕ. Ун чухне Владикпе пĕрле савăнĕç, чăрăш тавра юрлĕç-ташлĕç.

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

УЯВ

# «Çамрăксен хаçачĕ» – 90-ра



Чăваш çамрăкĕсем валли уйрăм кăларăм пичетлеме «Канаш» /хальхи «Хыпар»/ хаçатра ĕçлекенсем 1919-1920 çулсенчех палăртнă, анчах «Çамрăк хресченĕн» пĕрремĕш номерĕ 1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче çеç кун çути курнă. Унччен «Канашра» «Çамрăксен кĕтесси» рубрикăпа статьясем кăларса тăнă. Хĕрупраçпа яш-кĕрĕм валли кăларнă хаçатăн пĕрремĕш редакторĕ чăваш çыравçи Мĕтри Исаев /Аврель/ пулнă. Çирĕм çулта чухнех шанса панă ăна çак тивĕçе. Каярах хаçатăн тилхепине Николай Шелепи, Петĕр Хусанкай, Митта Васлейĕ, Виктор Рзай тытса пынă. Кăларăмăн малтанхи номерĕсем 1500 экземплярпа саланнă.

«Çамрăк хресчен» ятпа тухса тăма пуçланă хаçатăн ячĕ темиçе те улшăннă. 1930-1937 çулсенче – «Çамрăк колхозник», унтан – «Çамрăк большевик».

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан хаçат тухма чарăннă. 1952 çулта çеç «Çамрăк коммунист» ятпа çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнă вăл. Икĕ чĕлхепе пичетленнĕ хаçат: чăвашла тата вырăсла. 1966 çулта кăларăмăн чăвашла вариантне кăларма пăрахнă. Çакна «Пионер сасси» тухма пуçланипе çыхăнтарнă.

1996 çулта «Хыпар» хаçат редакцийĕ çине тăнипе «Çамрăксен хаçатне» çĕнĕрен чĕртсе тăратнă. Унăн пĕрремĕш редакторĕ – Геннадий Максимов. Ун хыççăн кăларăма Николай Коновалов, Роза Власова /Скворцова/, Любовь Чугунова, Надежда Яковлева редакциленĕ. Паян ку тивĕçе Дмитрий Моисеев пурнăçлать.

Чăваш çамрăкĕсем валли уйрăм хаçат тухма пуçланăранпа 90 çул çитнине паллă тума «Çамрăксен хаçачĕн» ĕçченĕсемпе тусĕсем раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарти Пукане театрне пухăнчĕç. ЧР информаци политикин министрĕ Александр Иванов ячĕпе хаçат ĕçченĕсене, ветеранĕсене тата штатра тăман корреспонденчĕсене министерствăн информаципе аналитика пайĕн пуçлăхĕ Евгения Кудряшова саламларĕ. Çавăн пекех «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕнтĕп редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Михаил Арланов, «Çамрăксен хаçачĕн» пĕрремĕш редакторĕ Геннадий Максимов хаçат тусĕсемпе вулакансене ăнăçу сунчĕç.

Калем ăстисем сумлă наградăсене – хаçат редакторĕ Дмитрий Моисеев ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хутне, Алина Изман корреспондентпа Елена Лукина корректор – асăннă министерствăн, Ирина Алексеева корреспондент Шупашкар хула Депутачĕсен пухăвĕн, Ирина Кошкина «Хыпар» Издательство çурчĕн Тав хучĕсене тивĕçрĕç.

Хаçат тата унăн ĕçченĕсен ячĕпе ăшă сăмах калакансем уяв сцени çине пĕрин хыççăн тепри хăпарчĕç, парнесемпе савăнтарчĕç. Сумлă хănасен йышĕнче Пушкăрт çыравçи Айгиз Баймухаметов та пулчĕ. «Çамрăксен хаçатĕнче» пичетленекен унăн «Ан хăвар, анне» повеçне хаçат тусĕсем хапăлласах вулаççĕ.

Уява чăваш эстрада юрăçисем илем кӳчĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕсем.



АСĂМРИ

# Кил ăшши

Шартлама сивĕ кунсем. Чăтаймасăр пĕренесем те шартлата-шартлата çурăлаççĕ. Чӳречесем шăнса ларнă – нимĕн те курăнмасть. Хĕл Мучи вĕсене эрешпе илемлетет. Эпĕ урана çăматă тăхăннă та кантăк умĕнче ларатăп. Ăна вĕрсе ăшăтатăп та урамалла пăхмалăх шăтăк тăватăп. Тулта ачасем çунашкапа ярăнаççĕ. Кӳршĕ ачисем авă çĕннине илсе тухнă. Пĕри ларма ĕлкĕрет, тепри çакланса хыççăн шуса анать. Пурте савăнăçлă хăйсем. Манăн та вĕсем патне тухас килет, анчах пальто кăмака çинче типет. Хушăран куншăн анне вăрçса та илет.

Акă таврана кас сĕмĕ те çапрĕ. Ыйхă та пусса килчĕ. Пӳртри шăрчăк çеç хăй ĕçне ывăнмасăр пурнăçларĕ – çĕрĕпех юрларĕ.

Куçа уçрăм та – ирех вăраннă аннене куртăм. 4 сехетрех тăрать вăл. Пӳртре шăп. Тăма васкамарăм эпĕ. Анне çăм чăлхине тăхăнчĕ те вутă илме тухрĕ. Часах кăмака хутса ячĕ. Эпĕ каллех сĕнк пулнă. Сăмсана тутлă шăршă кăтăкланине вăрантăм. Хырăм выççи вырăн çинчен тăратрĕ. Кăмака питлĕхне уçрăм – унта кукăль писет. Чукунра яшка вĕрет. Эпĕ пӳртре пĕччен. Часах алăк сасси илтĕнчĕ. Анне мана чĕнчĕ те выльăхсене шăварма хушрĕ.

Часах кăмака яшки антарса пачĕ вăл, кукăль касса тыттарчĕ. Çу юхса тăрать – епле тутлă! Тин суса кĕнĕ ăшă сĕт те ярса пачĕ анне. Ыттине вĕреме кăмакана лартрĕ, ку ĕнтĕ турăх пулать. Хăй çавăнтах уйран уçлама пикенчĕ. Эпĕ вĕри шыв ярса тăтăм. Часах çу тапса та тухрĕ. Çаврака çăкăр сăмсине касса çу сĕрчĕ, тăвар сапрĕ те ăна анне каллех мана тыттарчĕ. Эпĕ урама тухса чупрăм. Епле лайăхчĕ ун чухне...

Анне çĕре кĕчĕ – кил ăшши пĕтрĕ. Сивĕ çапнă пушă çурта кĕрсен кĕлетке чир ернĕ евĕр чĕтреме пуçлатчĕ. Упăшка çук. Ялта пĕччен пурăнма вăй-хал çитерейĕмесрен хăраса çуралса ӳснĕ çурта сутса ятăм. Выртсах макăртăм. Аттепе анне тунă çуртран уйрăлма йывăр пулчĕ, анчах ăна тытса та тăраймарăм.

Аттепе анне çурчĕ, кил ăшши асăмра виличченех пурăнĕç, чунăма ăшăтĕç. Мĕн пуррине упрама пĕлеймерĕмĕр. Ĕçчен çынсем нумай пулчĕçр, ялти çуртсем ан хупăнччăр...

**Л.АЛЕКСАНДРОВА.**

ШОУ

# Шупашкар хĕрĕ – Кипрта



● ЧĂВАШ ХĔРĔ КИПРТА ÇАК ВИЛЛĂРА 3 КУН ПУРĂНЧĔ.



● КАТЯ ШĂП ÇУР СТАКАН СĔТ СУРĔ.



● ЧĂВАШ ЯЛĔНЧЕ.



● ХĂШĔ – УЛПУТ, ХĂШĔ ХРЕСЧЕН ХĔРĔ?

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.)**

– Эпĕ модель агентстви уçнă, уйăхне 10 пин доллар ĕçлесе илетĕп. Кипрта та, Раççейре те пурăнатăп. Пафос хулинче 300 тăваткал метр лаптăклă вилла пур. Икĕ хутлă çурта 1 миллион çурă европа туяннă. Арçынсен кăмăлĕ хуçăлать пуль-ха та, анчах та эпĕ мăшăрлă, ача çуратнă. Маншăн çав тери хаклă çемье – Питĕрте, – хăйĕнпе паллаштарать вăл.

Катя лавккана çÿреме юратать. Кирлĕ-кирлĕ мар хатĕршĕн 30 пин евро тăкакланăшăн, тĕслĕхрен, пĕр чĕптĕм те пăшăрханмасть. Мĕн кулянмалли пур – çав укçана вăл кĕске вăхăтрах ĕçлесе илет.

Света амăшĕпе, ашшĕпе, йăмăкĕпе тата унăн пепкипе пурăнать. Муркаш районĕнчи Шарпашри кукашшĕпе кукамăшне пулăшма та вăхăт тупать çаврăнăçуллăскер. АЗСра вăй хураканскерĕн шалăвĕ 15 пин тенкĕпе танлашать. Шупашкар хĕрĕ Саша ятлă йĕкĕте килĕштерет. Унпа вăл ĕçре паллашнă.

## Тăварлă шÿрпе

«Шанхайри» хама кирлĕ çурта навигаторпа шыратăп. Çук, тупса парайманнипе çĕнĕ йышши хатĕр. Çурчĕ те, çĕрĕ те харпăрлăх пулманнине кура хула карттине кĕртмен курăнать.

Питĕрте çуралнă, Кипрта пурăнакан Катерина Света Борисовăн килне пĕр чăрмавсăрах шыраса тупни кăна шанăç кÿрет. Эпĕ вара пултараймастăп-ши? Телее, çул хĕрринчен инçех мар иккен вĕсен пÿрчĕ. Ахальтен мар иномаркăпах çитрĕ вĕт хăна. Сăмах май, ăна ырă кăмăллă водитель тÿлевсĕрех лесрĕ. Света хăварнă 50 тенкĕпе инçе кайăн-и?

Ку енĕпе ентеше ытларах ăнăçрĕ. Ăна Кипрта Катьăн амăшĕ кĕтсе илчĕ, хĕтлĕ пÿлĕме вырнаçтарчĕ. Унсăр пуçне хĕре ывăç тулли укçа пачĕç. Пуянсем хăйсен тараватлăхĕпе тĕлĕнтерчĕç.

Çапах чăвашсем те маххă памарĕç. Светăн амăшĕ Рена Ананьевна хăнан апат хатĕрлес ăсталăхне тĕрĕслесе пăхас терĕ. Çÿллĕ кĕлеллĕ пушмакпа подиум çинче утма хăнăхнă пикене шÿрпе пĕçерме ыйтрĕ. Выльăх ăш-чикне туянмашкăн пасара вĕçтернишĕн Катьăна ырламалла çеç. Шоу вăхăтĕнче пĕтĕм халăх умĕнче ташлани те, хак чакарма тăрăшни те килĕшÿллĕ пулса тухрĕ.

Катя наци апатне килĕштерменнине куртăмăр. Ăна хăнасем кăна мар, ыттисем те çиеймен иккен. Мĕншĕн тесен пĕçерекенсем тăвар хĕрхенмен. Апат хатĕрлеме хăнăхман чиперккене куншăн каçармалла ĕнтĕ.

Муркаш районĕнчи Шарпаша та туххăмрах çитрĕ «Йăл кулă тĕнче мисĕ». Качакана сиплесшĕнччĕ те – çăмарта ĕçтереймерĕ. Çапах кĕвентепе шыв йăтса, япала чÿхесе хуçасен кăмăлне çавăрчĕ вăл.

Светăн кукашшĕпе кукамăшĕн килĕнче хăна макăрса та илчĕ. Муркаш хĕрарăмĕсем чунран юрланине çапла йышăнчĕ вăл. Ялта сĕтел тулли апат-çимĕçпе кĕтсе илнĕ Катьăна. Ятарласах кукăль-пÿремеч пĕçернĕ. Тем тесен те хăна пăхма пĕлет ĕçчен чăваш халăхĕ.

## «Гарри Поттер» фильмри тăмана

Света мĕнле майпа лекнĕха çак кăларăма? «Интернетра пĕлтерÿ куртăм та скайп урлă кастинга хутшăнтăм. Шоу йĕркелÿçисем Чăваш Республикинче пурăнакан хĕре шыратчĕç. Хам пирки, Шупашкарти, Муркаш районĕнчи тăвансем çинчен тĕплĕн каласа кăтартрăм. Çакăн хыççăн мана кăларăма хутшăнма çирĕплетрĕç», – ăнлантарать чăваш хĕрĕ.

Амăшĕ шарт та март хирĕçленĕ-ха малтан. «Мана эсĕ мар тăк кам пулăшĕ?» – куçĕнчен пăхнă тĕпренчĕкĕ. Çакăн хыççăн Рена Ананьевна, паллах, хутшăнне улăштарнă. Чăнах, кирек хăш хĕрарăм та ачишĕн тем тума хатĕр. Светăн ют çĕршыва тÿлевсĕр кайса килес шанăç, тен, урăх пулмĕ те.

Шоури хăш-пĕр вăрттăнлăха уçас килет. «Рублево-Бирилево», «Женское счастье» тата ытти кăларăма хутшăннă Катя хăналаннă çĕрте сывăрма килĕшмен. Йĕркелÿçĕсем чиперкке хăна çуртĕнче пурăнма ыйтнине шута илнĕ. Экран çинче вара вăл Светăн вырăнĕ çинчех вăранать. Пуян хĕр ресторанта апатланнинчен те тĕлĕнме кирлĕ мар. Уншăн çакă – пурнăç йĕрки.

Светăн тăванĕсем Катя ачасене юратнине тÿрех асăрханă. Йăмăкĕн 2 уйăхри пепкине те алла тытсах юратнă вăл. Кайран пĕчĕк Артем валли паллă дизайнерсен япалисене ярса пама шантарнă. Хальлĕхе посылка килмен-ха. Те вăхăт, те май пулман унăн?

«Кипра кайса килни нихăçан та манăçмĕ. Ташă каçĕнче савăнни, шыв мотоциклĕпе ярăнни кадра кĕнĕ. Зоопаркра çÿренине, шел те, кăтартмарĕç. Унта жирафа апатлантартăм. Çулçăшăн 10 евро ыйтрĕç. «Гарри Поттер» фильмра ÿкерĕннĕ тăманана кăтартрĕç. Попугайсемпе шоу йĕркелени çаплипех куç умĕнче. Икĕ алă çине вăрă сапрĕç. Вĕçсе килекен кайăксем ман çине ларчĕç», – палăртать Света.

Ăнăçу, пуян пурнăç вăрттăнлăхне уçма пултарчĕ-ши Шупашкар хĕрĕ? Кипрта хăналанни мĕнле пĕтĕмлетÿ тума пулăшрĕши ăна?

«Кашни çыннăн ĕмĕт-тĕллеве пурнăçлама тата телей тупма тăрăшмалла. Укçа нумай-и, сахал-и – ку пĕлтерĕшлех мар. Ăнланакан çывăх тăвансем, юратакан çын, килĕшекен ĕç пурри нимрен хаклă. Çак пуянлăха упрамалла», – кăмăлĕ лайăх пикен.

## Асăнмалăх парне

Света Борисова – аслă пĕлÿллĕ. Кăларăмра ăна заправкăра ĕçленине кăтартрĕç. Тĕрĕссипе, унăн вырăнĕ – бензин янă çĕрте мар, кассăра. Çапах тин çеç руль умне ларнă водительсене бак тултарма пулăшмашкăн хирĕç мар вăл. Ăшă çĕртен урама чупса тухма та тивет-мĕн.

Шупашкар хĕрне асăнмалăх икĕ кĕпе, хаклă эреш парнелесе янă. Çывхарса килекен уявсенче тăнăхса-çакса кăтартĕ вĕсене.

Екатерина Шаровăна та пушă алăпа яман. Ăна валли чăваш эрешĕллĕ сĕтел витти ятарласах туяннă.

## Каçхине çÿреме чарман

Света Кипрта тăван тăрăхшăн тунсăхлама ĕлкĕрнине пытармасть. Халĕ Катьăпа иккĕшĕ Интернет урлă хутшăнаççĕ.

«Барышня-крестьянка» кăларăма авăн вĕçĕнче ÿкерме пуçланă. Рена Ананьевна медсестра ятарласах 1 эрне отпуск илнĕ.

«Ачасене пĕчĕкренех хăйсене шанса пурăнма вĕрентнĕ. Хастарлăхĕшĕн, вĕренÿре ĕлкĕрсе пынăшăн учительсем мухтатчĕç вĕсене. Света, сăмахран, шкул хыççăн манран укçа ыйтса курман. Малтан техникумра, унтан аслă шкулта пĕлĕвне тарăнлатнă вăхăтрах ĕçлеме те май тупнă.

Хĕрсене каçхи клуба та, ташă каçне те кайма чарман. «Çÿрĕр, анчах пуçа ан çухатăр», – тенĕ. Манăн шухăшпа, хальхи пурнăçра çапла пулмалла та. Çамрăксен килтен тухмасăр пурăнмалла мар. Хĕрсен кирек хăçан та хăйсене хÿтĕлеме пултармалла», – чунне уçать амăшĕ.

Светăн пушă вăхăт çукпа пĕрех. Вăл спортпа туслă, хĕвелтухăç ташшисене килĕштерет. Çак ăсталăх ăна Кипрта хăйне кăтартма пулăшрĕ. Сцена çинче мĕнешкел илĕртÿллĕ авкаланчĕ чăваш хĕрĕ.

Çарамас сăнÿкерĕнме килĕшменшĕн амăшĕ те ырлать ăна. Çакă савнине те килĕшмен пулĕччĕ.

Калаçуранах Света Сашăна мĕнешкел хытă юратнине пĕлме пулать. Мĕн чухлĕ ăшă та çепĕç сăмах пĕлет каччă! Кашнине уйрăм хут çине çырнă. Шкап çине çыпăçтарнăскерсене хам та вуларăм. Чун ирĕлсех кайрĕ.

Катя кăларăма хутшăнакансене пурне те хăнана чĕнсе хăварнă. Кам пĕлет, тен, татах тĕл пулĕç вĕсем?

Хăна выльăх ăш-чикне, кăларăмра кăтартнă пек, 300 тенкĕпе мар, хăйĕн укçипе маларах туяннă. Чăваш Республикинче 3 кун мар, ытларах пурăннă...

Юлашкинчен хам та шоу йĕркелес терĕм. Рена Ананьевна, тĕслĕхрен, гитара каламасть, анчах çав инструмента аллине тыттарсанах артиста çаврăнчĕ вăл. Хĕрарăм кĕвĕ кăларма пĕлменнине кам ĕненĕ?

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



● АЛЛА ТЫТРĔ ВĂЛ ГИТАРА...

wday.ru, Пятница, Baryshnya.friday.ru тата автор информацийĕпе сăнÿкерчĕкĕсем.

### АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



**Сыр айĕнчи пулă**

**500 грамм шăмăсăр пулă, пуслă 1 сухан, 50 грамм хытă сыр, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Пулă татăкĕсене тăвар, пăрăç сапмалла. Çурма çаврашкан каснă сухана ăшаламалла. Сыра теркăламалла.

Пулла, сухана, сыра сийлесе хумалла, микрохумлă кăмакара 10 минут пĕçермелле.

**Панулмипе çĕрулми салачĕ**

**100 грамм панулми, 130 грамм апельсин, 100-шер грамм кишĕр, çĕрулми, 150 грамм хăяр, 0,2 грамм лимон йӳçекĕ, сахăр, майонез кирлĕ.**

Çĕрулмипе кишĕре пĕçермелле. Туранă çимĕçсене лимон йӳçекĕпе, сахăрпа, майонезпа пăтратмалла.

**Кăлпассипе, хăярпа**

**Тĕтĕмленĕ 100 грамм кăлпасси, пĕçернĕ 1 кишĕр, маринадланă 100 грамм хăяр, консерваланă 100 грамм шалча пăрçи, 100 грамм хура çăкăр, салат çулçи, петрушка, майонез, тăвар кирлĕ.**

Кишĕре, çăкăра – тăваткаллаcа, кăлпассипе хăяра пĕрчĕлесе турамалла. Салат çулçине алăпа татмалла, петрушкăна вĕтетмелле. Çăкăра тип çупа ăшаламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тутă кĕртме тăвар хушмалла.

**Брауни**

**100 грамм шăккалат, 120 грамм услам çу, 150 грамм сахăр, 4 çăмарта, 150 грамм çăнăх, 1 чей кашăкĕ апат соди, 400 грамм тăпăрч, чĕптĕм тăвар кирлĕ.**

Шăккалатпа услам çăва ирĕлтермелле.

2 çăмартана 50 грамм сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, тăвар хушмалла.

Тăпăрча юлашки сахăрпа, çăмартапа хутăштармалла.

Кăпăклантарнă çăмартана шăккалат хутăшне ямалла, çăнăхпа, апат содипе пĕрле миксерпа пăтратмалла.

Чустан çур пайне çатмана ямалла, тăпăрч хутăшĕ хумалла, çиелтен юлашки чустапа витмелле. Ăна духовкăра 50 минут пĕçермелле. Сивĕнсен тăваткаллаcа касмалла.

**Мультикăмакари кукăль**

**100 грамм хăйма, 150 грамм услам çу, 1,5 чей кашăкĕ апат соди, 250 грамм çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 200 грамм хăйма, 200 грамм сахăр, 1 çăмарта, 3 апат кашăкĕ çăнăх, йӳçĕ 3 панулми хатĕрлемелле.**

Ирĕлтернĕ услам çăва хăймапа, çăнăхпа, апат содипе пăтратмалла. Чустана мультикăмака чашăкне хумалла, айккине 2 сантиметр хăпартмалла. Çиеле çурма çаврашкан туранă панулми хумалла.

Çăмартана, сахăра, хăймана, çăнăха миксерпа пăтратмалла. Çак хутăшпа панулмие витмелле. Кукăле 80 минут пĕçермелле.

**Тăпăрч хăпартăвĕ**

**500 грамм тăпăрч, 3 апат кашăкĕ хăйма, 2 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 2 çăмарта, 3 апат кашăкĕ сахăр, тăвар, исĕм кирлĕ.**

Исĕме вĕри шывра шӳтермелле. Манна кĕрпине хăймапа пăтратса 30 минутлăха лартмалла.

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, тăвар хушмалла.

Ала витĕр кăларнă тăпăрча çăмартапа, манна кĕрпипе, исĕмпе пăтратмалла. Çак хутăша услам çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Хăпартăва 45 минутлăха духовкăна лартмалла. Сивĕнсен улма-çырлапа илемлетме юрать.

**Катлетпа çĕрулми**

**400 грамм какай фаршĕ, пусла 1 сухан, 3 шăл ыхра, 2 татăк хура çăкăр, тăвар, пăрăç, çăнăх, 8 çĕрулми, тип çу кирлĕ.**

**Соус валли 4 апат кашăкĕ хăйма, 1 апат кашăкĕ кетчуп, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Вĕтетнĕ сухана, сĕтпе йĕпетнĕ çăкăра фаршпа пăтратмалла, тăварпа пăрăç ямалла. Çак хутăшран катлет туса çăнăхпа йăваламалла. Пурне те тип çу сĕрнĕ çатмана майлаштарса хумалла.

Шултран туранă çĕрулмие тип çупа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Ăна катлетпа пĕрле духовкăна лартмалла.

Хăймана кетчуппа, 120 миллилитр шывпа, тăварпа, пăрăçпа хутăштармалла. Çак соуспа çурма пиçнĕ çĕрулмипе катлета витмелле.

### СЫВЛĂХ

# Хурма

**Çак çимĕçпе сăйланма хистекен нумай сăлтав пур.**

● Хурмари бета-каротин çимĕçе тĕс кĕртет çеç мар, куçа та сиплет, вăл ватăлассине вăрахлатать.

●Ку çимĕçпе час-часах апатлансан бронхитпа ӳпке шыççи хăратмĕç. Табак туртакансен те хурма çимеллех.

● Чĕре тĕртĕмĕсем лайăх ĕçлесчĕр тесен организма калипе ӳсен-тăран сахăрĕсем çителĕклĕ кирлĕ. Хурма ку ыйтăва тивĕçтерĕ. Çимĕçе сӳхе юн тымарĕлĕ тата юн пусăмĕ пысăккипе асапланакансене те çиме сĕнеççĕ.

●Хурма хырăмлăх ыратнине те иртерет. Вар-хырăм пăсăлнă чухне те тăкăскăлăхĕпе каяша йĕркене кĕртме пулăшать.

● Пиçнĕ, каснă вырăнсене пирчеме те пулăшать çимĕç. Çемçине суран çине хумалла. Пӳрленесрен хăрамалла мар кун пек чухне – хурма лайăх антисептик.

●Шăк хăваланăран ăна шăк çулĕсен чирĕсемпе асапланакансене çиме хушаççĕ. 3-4 çимĕçе ăшă сĕтпе сыпса хăналансан витĕмĕ çав тери аван пулĕ.

Хурмари магни пӳрери тăварсене кăларать.

●Çулçисенчен хатĕрленĕ чейпе çимĕçре микроэлемент питĕ нумай. Вĕсемпе час-часах хăналансан анеми пирки пачах манма юрать.

●А тата С витаминпа пуянскерпе туслашсан шăнса чирлесси те хăратмĕ. Енчен те ăнсăртран чирлерĕр, пыр ыратать тăк çак меслет пулăшĕ. 1 хурма сĕткенне 20-30 грамм шывпа хутăштармалла та пыра чӳхемелле.

●Куллен 1 хурма çини нервсене лăплантарĕ, ыйхă килме тытăнĕ. Магни, глюкозăпа фруктоза кăмăла уçĕç.

● Çисе ярайман хурма касăкĕнчен вара маска хатĕрлеме пулать. Вăл пӳрлешкесене пĕтерме пулăшĕ. Ăна хатĕрлеме çемçине 1 çăмарта саррипе хутăштармалла та пите сĕрмелле. 20 минут тытмалла.

Хурмана тĕрĕс епле суйламалла-ха? Хуппине пăхмалла. Енчен те ун çинче йĕрсем пур тăк – вăл пылак. Мĕн чухлĕ нумайрах – çавăн чухлĕ тутлăрах. Чи лайăх çимĕç хытă хупăллă та çемçе ăшлă. Писменниччен те хăрама кирлĕ мар. Ăна чӳрече янаххине хурсан темиçе кунран вăл çемçелĕ.



### ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Сурăх чирлесен



Сурăх лайăх ĕрчетĕр, ан чирлетĕр тесен ăна тĕрĕс пăхмалла. Минераллă апат çителĕклĕ кирлĕ. Сахăр кăшманне ытлашши пама юрамасть, вĕсем унпа наркăмăшланма пултараççĕ. Сурăхсен пӳлминче типĕ пулмасан çилли шăнать. Йĕпере тăрсан выльăх чĕрни начарланать, хăй шĕвĕрĕлченпе аптрама пултарать. Пĕр пӳлмере 4-5 сурăхран ытла тытмалла мар, унсăрăн тĕрлĕ чир аталанас хăрушлăх пысăк. Апата вăхăт-вăхăт улăштарсан та лайăх, типпипе кăшмана черетлемелле. Сурăха тăрă шыв пама тăрăшмалла. Çăнăх та ытлашши кирлĕ мар, вăл выльăх вар-хырăмне сиенлеме пултарать, апат ирĕлессине япăхлатать.

Анлă сарăлнă чирсенчен пĕри – бруцеллез. Вăл ытти сурăхран ерет. Унăн бактерийĕсем ытларах таса мар пӳлмесенче, пахалăхсăр апатра, таса мар шывра нумай вăхăт упранаççĕ. Выльăха çуркунне кĕтĕве кăларнă чухне тимлĕ пулмалла. Бруцеллезпа чирлĕ сурăхăн хырăмĕ ӳкет.

Кĕçĕ выльăха таса мар вырăнта тата чирлĕ сурăхсенчен ерет. Кĕçĕпе чирлĕ сурăхăн çăмĕ вăйлă тăкăнать, вырăн-вырăнпа пачах çаралса юлать. Выльăх канăçсăрланма пуçлать, апат япăх çиет, начарланать. Кĕçĕ ерсен ветеринартан пулăшу ыйтмалла.

### ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Пӳртри чăрăш – араукари



Килте лăсăллă ӳсен-тăран çитĕнтерекенсем те пур. Йĕплĕскерсене, çулçăллисемпе танлаштарсан, çитĕнтерме çăмăлах мар. Çапах тăрăшсан пӳлĕмрех чăрăш çитĕнтерме те пулать. Ялан симĕс ларакан, пӳлĕмре те ӳсекен лăсăллă чечексенчен пĕри – араукари.

Ăна валли çутă, анчах хĕвел пайăрки тӳрремĕн ӳкмен вырăн суйламалла. Хĕлле ăна 10-14 градус ăшă та çителĕклĕ, çулла 20-22 градусра аван çитĕнĕ. Пӳлĕмри температура выляни кăмăлне каймĕ.

Час-часах тата нумайшар шăварма тивĕ. Шыва малтан тăрăлтарсан аван. Вĕретсе сивĕтни те юрать. Çумăр шывĕ пушшех паха. Тăпри типĕ пулнине юратмасть араукари. Анчах вăл ытлашши йĕпе те ан пултăр. Пӳлĕмри сывлăш типĕ тĕк ăна кунне 2-3 хутчен те пĕрĕхтерме тивĕ.

Пӳртри «чăрăш» органикăна кăмăлламасть, çавăнпах минерал им-çамĕпе усă курмалла. Кальци пачах памасан та юрать. Тăпрана йӳçĕтсен пушшех аван.

Çамрăк хунавсене – 2-3, пысăккисене 4-5 çулта пĕрре куçармалла. Куршака йӳçĕ торф, лăсă тăпри хушмалла. Чечеке ытлашши канăçсăрлантарма, тымарне амантма юрамасть.

Араукарие вăрăран та çитĕнтерме пултаь. Ăна куршака пĕрерĕн акмалла. Торфа хăйăрпа хутăштарса нӳрлетмелле те ăшă вырăна лартмалла. Вăрлăх сăмсине 2 эрнерен те, темиçе уйăхран та кăларма пултарать. Малтанхи вăхăтра хунав çав тери майĕпен çитĕнет.

* * *

Азот, фосфор, хлорлă кали, кали тăварĕ минерал им-çамĕ йышне кĕреççĕ. Азот ӳсен-тăран тунипе çулçине вăй илме пулăшать, çавна май хăш чухне чечек вăхăтра çуралаймасть. Çакна шута илсе азотлă им-çампа пĕчĕк виçепе усă курмалла. Унпа чечеке кашни 10 кунра апатлантарма юрать.

Чечек çурма хатĕрленекен ӳсен-тăрана суперфосфат кирлĕ.

Минерал им-çамĕн витĕмĕпе ӳсен-тăран пĕчĕк чӳлмекрех чечеке ларма пултарать. Ăна пысăкраххине тăтăш куçармасан та юрать.

Минерал им-çамне чечек лавккинче сутаççĕ.



ЧУНРИ

# Кусунтан пăхса ăнланăп...

Ытла та ырă-ши эпĕ? Е айван-ши? Хама хам та ăнланмастăп. Епле касартăм-ши сана? Пĕлместĕп. Тунсăхланине çеç туятăп. Ĕненессĕм те килмест – эпĕ каллех сан çинчен шухăшлатăп. Кулăшла та пек, çапах ку – чăнлăх...

Сана чунăмран тĕппипех кăкларăм пулĕ теттĕм. Сансăр пурăнма вĕрентĕм. Анчах чĕрем тĕпĕнче яту упранать иккен. Малтанах çакна асăрхаман та. Тен, чухласан та пытарма хăтланнă-ши? Пурнăçăма çапса хуçнă, чĕреме çунтарнă çынна пачах курайми пулса çитнĕччĕ. Ятна та асăнмастăм. Вăхăт иртнĕ майăн япăххи темшĕн манăçать. Чун йывăр тиеврен хăтăлса çăмăлланать. Лайăххи вара темле тăварлăхра та упранма вырăн тупатех авă. Ырри çулăмра çунмасть, кăварта кĕлленмест, шывра путмасть. Темле асар-писер çил те лăскаса хавшатаймасть ăна, аса-çисĕм те хуратаймасть.

Акă манăн ăшăмри çил-тăвăл та лăпланчĕ. Çанталăк уяртма ĕлкĕрчĕ çеç – тунсăхлама та тытăнтăм. Çапла, кулăшла. Тепĕр чухне хăрушă та. Çулăмпа çуннă, туйăмсен кăварĕн тĕтĕмĕпе чыхăннă самантра вăхăт иртсен эпĕ сана лăпкăн аса илсе йăл куласса систерекене ухмаха тухнă тейĕттĕм. Халĕ акă хам аташатăп пулмалла. Пĕрле иртнĕрĕ кунсене куç умне кăларнă май кĕлеткем тăрăх темле хум чупса иртет. Сивви, çÿçентерекенни мар, ăшши, темĕнле ырăлăх кÿрекенни. Чăн юрату вилмест теççĕ. Çакă-и асар-писертен çăлăнса тухнă таса туйăм? Вăлах пулсан ун пирки пурăнма хавхалантарать теççĕ...

Юлашки вăхăтра час-часах аса илетĕп сана. Пĕрмаях тесен те йăнăш мар-тăр. Çамрăк чухнехиллех тунсăхлатăп сансăр. Тен, вăйлăрах та. Çук, сана курассишĕн антăхмастăп эпĕ. Ырă асаилÿсемпе пурăнатăп. Сăнару та куç умĕнчех. Пĕлетĕп: юрамасть капла, анчах асăма час-часах килетĕн пулсан мĕн тăвас-ха манăн? Шухăшăмсене иртнине таврăнма епле чарас? Çăварлăхламан юланута йĕвенпе тытса чарайман. Ирĕке тухнă туйăмсем те çаплах. Сывлăша çурса çапнă пушă сасси те хăратмасть вĕсене.

Хĕрарăмсен ĕмĕтĕнчи арçын мар эсĕ. Япăх енсем чылай санра. Анчах пахи те çук мар. Шăпах вĕсемпе ыттисенчен уйрăлса тăма пĕлеттĕн те. Тен, çавăнпах саврăм та сана. Юратма пĕлеттĕн. Еплерех сăмахсем калаттăн! Ачашшăн сĕртĕнсе çепĕççĕн çупăрлама та ăстаччĕ эсĕ. Эпĕ саншăн сывлăш пек кирлине палăртаттăн. Пире вара, хĕр-хĕрарăма, çакă кирлĕ мар-и?

Айванла, анчах чĕрем тĕпĕнче эсĕ те мана хушăран та пулин аса илетĕн тесе ĕненетĕп. Чăннипех шанатăп çакна. Тепĕр чухне эсĕ шăнкăравласса та кĕтетĕп. Санпа курнăçма та хирĕç мар эпĕ. Мĕн калассине, хама епле тытассине те тахçанах палăртнă. Малтанласа санпа ăнсăртран тĕл пуласран хăраттăм. Туйăмсене тытса чараймасăр мăнкăмăллăн иртес вырăнне ыратăва манса санăн ытамна ыткăнасран шиклене ттĕм. Халĕ – чупса пымăп, анчах сăмах чĕнмесĕр иртме те пултараймăп. Чарăнса тăрăп та: «Епле пурăнатăн?» – тесе ыйтăп. Туйăмсене палăртмăп эпĕ. Эсĕ те чун-чĕрÿнте мĕн пулса иртнине каласа кăтартма хăяймăн, пушшех те – пытарма хăтланăн. Мансăр тунсăхланине кусунтан пăхса çеç ăнланăп.

Аса илетĕн-ши тулккăш? Хушăран та пулин... Ырри манăçнă тăк усалпа асăн хăть. Ан ман кăна. Эсĕ те мана асра тытнине туйма пултарам.

**ЯНА.**



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Пĕр арçынна пайлаймаççĕ

Хунямăшĕпе аванах килĕштерет-ха Марине, анчах тепĕр чухне тем пулать хĕрарăма. Кинне ывăлĕ çумне кĕвĕçме пуçлать тейĕн. Акă паян та ним çукранах вăрçăнса тухса кайрĕ.

Хĕр университетăн юлашки курсĕнче вĕреннĕ чухне паллашрĕç çамрăксем. Арăмĕнчен çулталăк аслăрах Саша салтакран таврăнса ĕçе вырнаçма та ĕлкĕрнĕччĕ вăл вăхăта. Йĕкĕт хĕре тÿрех куç хыврĕ ун чухне. Анчах Марине Максăмпа çÿретчĕ те Сашук енне вăл кас çаврăнса та пăхмарĕ. Пĕр кĕрекене палламан хĕрпе ахальтен лекменнине ĕненсе яш часах ăна социаллă сетьре шыраса тупрĕ те тĕлпулăва чĕнчĕ, хирĕçлемени шанăç кÿчĕ. Максăмпа Марине хушшинчи хутшăну та хавшасах çитнĕччĕ ĕнтĕ, çавăнпах пике те икĕ сыпăкри аппăшĕн çуралнă кунĕнче паллашнă яшпа усăлса çÿреме килĕшрĕ.

Çав касран пуçланчĕ те юрату. Пĕр-пĕрне сыру çырма тытăнчĕç вĕсем. Май тупăнсанах Саша Маринăна кинона, кафене чĕнчĕ. Кун хыççăн кун иртни сисĕнмерĕ. Часах хĕр диплом илчĕ. Специальноçпа вырнаçма май килмерĕ унăн. Тепĕр тесен, хĕр шкулта ĕçлеме ытлашши туртăнмарĕ те, суйланă профессие чунне вырнаçманнине вĕреннĕ чухнех туйрĕ. Çавăнпах тусĕ суту-илÿ центрне чĕнсен хирĕçлемерĕ.

Ялта çуралса ÿснĕ пулин те алли якаччĕ Маринен. Асламăшĕпе çитĕннĕскерсен кĕреçе-сенĕк аври тытма тиветчĕ-ха, анчах чылай ĕçе ватă хăй пурнăçлатчĕ, мăнукĕсене выляма-канма ирĕк паратчĕ. Çавăнпах ÿсерехпе те пушă вăхăта чиперленсе ирттеретчĕ Марине. Хулана вĕренме килсен те çак йăларан пăрăнмарĕ. Сăн-питне тимлĕх уйăратчĕ, çавăнпах ун пирки хула хĕрĕ тесе те шухăшлатчĕç теприсем. Чиперкке хыççăн чупакан та сахал марччĕ. Çакăнпа усă курма та пĕлетчĕ вăл. Тĕл пулас тесен ăна чаплă кафене илсе каймаллине, парнепе савăнтармаллине систеретчĕ. Çавăнпах укçасăррисем ун патне пымастчĕç те. Тумланма та капăр тăхăнатчĕ вăл. Килĕшÿллĕ япала суйлама пĕлетчĕ. Халĕ те çаплах. Яланах ятуллă та яка çÿрет.

Çынсемпе пĕр чĕлхе тупма та ăста Марина. Çакна пулах ахаль сутуçăран часах аслине куçарчĕç ăна. Пусма-тавар сутаканскер, паллах, май тупăнсанах хăйне те çĕнĕ япалапа савăнтарчĕ. Хунямăшне те капăрланма вĕрентрĕ. Куншăн халĕ час-часах тав тăвать хĕрарăм. Ытларах уявсенче пĕрер черкке сыпсан кинне ырласа пĕтерейместь. «Марина хитре пурăнма вĕрентрĕ. Кин çын турĕ», – тет вара ниçта кайса кĕмелле мар ыталаса чуптунă май.

Çапла çулталăк туслă çÿренĕ хыççăн Сашук пĕррехинче Маринене хăйсем патне пурăнмаллах куçма ыйтрĕ. Хăнана кайса курман мар хĕр. Пулас хунямăшĕпе те яланах аван калаçнă-хутшăннă. Тĕрĕссипе, çĕр касмалла та юлса курнă. Часах пĕрлешме шут тытнине кура Сашукăн сĕнĕвĕпе турткаланмасăрах килĕшрĕ вăл. Ара, кун пек перекетлĕрех те – хваттер тара илсе пурăнмалла мар.

Çапла пуçланчĕ те ахăр самана – хунямапа ывăлĕшĕн çапăçасси. Çук, куллен пымарĕ ку вăрçă. Чылай чухне лăпкăлăх хуçаланчĕ килте. Анчах кин – кинех, ун тĕлĕшĕпе мăкăртатмалли тупăнатех. Анчах хĕрарăмсенчен аслăраххи мĕн калани хăлхине чикмерĕ Марине. Халĕ те çаплах. Унсăрăн пурăнма çук. Кашни сăмахне чĕре çумне илсен чăн-чăн вăрçă пуçламалла. Хуняшшĕ вара çав тери лăпкă арçын.

Пĕр ывăл çуратса ÿстернĕскерсем, паллах, юсав ĕçĕ тума укçа-тенкĕ пухма май тупма пултарнах. Анчах кăмăлĕ пулман курăнать. Çавăнпах хваттер сăн-сăпачĕ те кивелсех кайнăччĕ. Марине, капăр та илемлĕ пурăнма хăнăхнăскер, часах кунта хăйне хуça пек туйма тытăнчĕ те юсав тума сĕнекен пулчĕ. Юлхавланса ларакансем турткаланчĕç-ха. Вĕсене вырăнтан тапратма çуккине ăнлансан Марине аптăраса тăмарĕ, Сашукпа иккĕшĕн пÿлĕмне ĕçрен отпуск илсех çĕнĕ обой сыпăçтарчĕ, сĕтел-пукана та вырăнпа улăштарчĕ, çĕнĕ шкап туянчĕ, чÿрече карри те улшăнчĕ. Пÿлĕм çĕнелсе çуталнине, кинĕ ахалех тăрмашманнине курсан хунямăшĕпе хуняшшĕ ытти пÿлĕмсенче хусаланма та чармарĕç. Çапла пушшех пĕр чĕлхе тупрĕç вĕсем.

Апла пулин те хирĕçмелли тупăнатчĕ-ха. Чылай чухне Маринепе хунямăшĕ Сашука пайлаймастчĕç. Ывăлĕ хăйĕн умĕнче тăпăртатса тăнине хăнăхнă амăшĕ тĕпренчĕкĕ пĕтĕм вăхăтне урăх хĕрарăмпа ирттернине йывăррăн йышăнчĕ. Сашукпа Марине ăçта та пулин кайсан хăйне валли вырăн тупаймарĕ.

Часах туй та кĕрлеттерчĕç çамрăксем. Хуняма карчăк вара кинпе пурăнса ывăнчĕ курăнать. Килĕштернĕ çĕртех тем пулать ăна, мăртăхма тытăнать. Çакна юлашкинчен кинĕ кăна мар, ывăлĕ те чăтаймарĕ. Çавăнпах хваттер тара илсе пурăнма тытăнчĕç вĕсем. Ăшă йăва хирĕçле çуртрах тупăнчĕ.

Анчах лару-тăрăва ытлашши улăштармарĕ ку. Хирĕçнĕ чухне çеç пĕр-пĕрипе тĕл пулмарĕç хĕрарăмсем. Кĕвĕçÿ туйăмĕ çав-çавах упранчĕ. Кăмăлĕ лайăх чухне хунямăшĕ ывăлĕпе кинне кукăль çиме те, чей ĕçме те час-часах хăнана йыхравлать. Уявсенче те халĕ те чиперлемне, илемлĕхре пурăнма вĕрентме кинне вĕсене Турă хăй ярса панă тесе пиллет. Анчах темшĕн ывăлĕн хăйĕн çемье пуррине, вăхăта арăмĕпе ытларах ирттермеллине ăнланса çитеймест хĕрарăм. Çакăншăнах хирĕçеççĕ те.

Акă паян та çак сăлтавпах вăрçăнчĕ хунямăшĕ. Кинĕпе ывăлĕ яла кайма пуçтарăнни килĕшмерĕ ăна. Ара, вăл аппăшĕ патне хăнана кайма эрнипех ĕмĕтленсе пурăннă тет. Темшĕн маларах систермен тулккăш...

**Анна НИКОЛАЕВА.**

АХРĂМ

# «Çĕр епле чăтать-ши мана?..» статья тавра

Пурнăçра çĕр пăрăнăç тесе ахальтен каламан. Темĕн тĕрлĕ шухăш-кăмăлпа, пит-куçпа пуян вăл пурнăç... Паллах, пире пĕрре çуратса янă тăк хăть епле пулсан та пурăнмаллах, йывăрлăхсене çĕнсе, хамăра алла илсе.

«Çĕр епле чăтать-ши мана?..» статьяри Валентина евĕр çĕр пăрăнăçпа пурăнни, хамăра хамăр чун-чĕре туртăмĕпе хисеплемени, пылчăкпа вараланни чыс кÿместех пире. Миçе çынна хура тĕслĕ сăрăпа сăрламасть-ши чараксăр хĕрарăм?!

Статьяна темиçе хутчен вуласа тухнă хыççăн шухăша кайрăм эпĕ. Мăшăрăма та сĕнтĕм Валентинăн тĕлĕнтермĕшне хаклама, чун-чĕре тарăхăвне усма, хама кусран калама. Иксĕмĕр те пĕр урапа çине лартăмăр, хамăр хушăри «Валентинăсене» пÿрнесем çине хурса шутларăмăр. Тĕрĕссипе, пирĕн тăрăхра йышлăнах мар-ха вĕсем. Çапах та пур...

Çемьен чăмăрĕ, çирĕплĕхĕ, теветкеллĕхĕ ют-çке Валентинăшăн. Пуçĕнче çил вĕрет, чун-чĕринче те пушă-пушă, хевтелĕх сирĕлнĕ унăн. Мăшăр пур çĕртех: «Килен-каян арçынсем те ман пата чăрăнатчĕç», – тет.

Вăт, пирĕн тăрăхри пĕр çамрăк хĕрарăм та, ачисем çумĕнче чухнех юттисене куç хывать. Арçынсене перчетке пек улăштарать. Сылăхлă, чăнах...

Вĕренĕн вĕçĕ пур. Хăть мĕнле япала та шайне кура вырăнлă курăнать. Çыннăн вара шутлама, пурăнма, йăнăша тÿрлетме чылай май пур. Япăххине çумран сирмелле, лайăх еннелле пăхмалла. Ырри çеç çăлать лачакаран.

Çăмăлттай, ясар, ĕçкĕç... Паян çак пулăмсем ура хурса пыраççĕ те пурнăçра. Ырă тĕслĕх, ĕçченлĕх, илемлĕ сăнсăпат пуянлатать çынна.

Валентина, хăв йăнăшусене тинех ăнланма тытăнтăн пулсан, маттур эсĕ. Апла пулсан, пуçламăшĕ пур. Çур çулта ан чарăнах...

Хăш районта, хăш ялта пурăнатăн-ши эсĕ? Çамрăк, вăйпитти пулĕ-ха...

**Георгий ТУСЛИ.**
Трак тăрăхĕ,
Пайсупин ялĕ.

Левтина МАРЬЕ

# Асамлă Çĕнĕ çул

*Икĕ пайлă юмах пьеса*

Вылякансем:
КУКАÇ – вăрман хуралçи
МАРУК, ИЛЮШ – мăнукĕсем
ТИЛĔ
ПАКША
МУЛКАЧ
ХĔЛ МУЧИ
КАШКĂР
ЧĂРĂШ
ЧАКАК
ЮМАН

### ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

**Çĕнĕ çул çывхарса килет. Вăрман хуралçи хăйĕн хулара пурăнакан юратнă мăнукĕсене – Марукпа Илюша – Çĕнĕ çула хăй патне вăрмана илсе каять. Вĕсем çуна çине ларнă та вăрман илемĕпе киленсе, тĕлĕнсе пыраççĕ.**



КУКАÇ. Ну! Ну! Атя, атя чуптар хăвăртрах! Кас пуличчен мăнуксемпе ăшă пÿрте çитсе ĕлкĕресчĕ. Унтан чăрăш лартас пулать. Ăна тата илемлетмелле. Ну!.. Атя чуптар!

МАРУК. Эпир, кукаçи, чăрăш çине çакмалли капăр теттесене хамăрпа пĕрле илсе килтĕмĕр.

ИЛЮШ. Чăрăш тăррине лартма хĕрлĕ çăлтăрне те манса хăвармарăмăр.

КУКАÇ. Маттур эсир, юратнă мăнукăмсем, çав тери маттур. Марук, Илюш, эсир шкулта та лайăх вĕренетĕр пулĕ-ха?

МАРУК. Лайăх вĕренетпĕр, кукаçи.

ИЛЮШ. «Иккĕсем», «виççĕсем» илнĕ тĕк аттепе анне сан пата хăнана яман пулĕччĕç.

КУКАÇ. Мана хисеп тунăшăн тавтапуç сире, ачасем.

МАРУК. Илюш, кур-ха, кур! Пакша пĕр йывăç туратти çинчен теприн çине мĕнлерех сиксе каçрĕ!

ИЛЮШ. Тилĕ чупать! Куратăн-и?! Мĕн тери илемлĕ вăл! Хăй хыççăн юлакан ура йĕррине кăпăшка хÿрипе шăлса хăварать чееске.

МАРУК. Йывăççем тата! Шур мамăкпа витĕннĕ тейĕн...

КУКАÇ. Çапла, юратнă мăнукăмсем, эпĕ нумай çул ĕнтĕ кунта вăрман хуралçинче ĕçлетĕп. Вăрман пурнăçĕ вăл чăн-чăн юмахри пек асамлă тĕнче!

ИЛЮШ. Ку таранччен сана никам та тапăнман-и, кукаçи?

КУКАÇ. Çук, тапăнман.

МАРУК. Кашкăр та-и?!

КУКАÇ. Кашкăр та. Вĕсемпе туслашсан, вĕсене упрасан чĕрчунсем хăйсем сана усал тăшмансенчен сыхлама тытăнаççĕ.

**Кĕтмен çĕртен асар-писер çил-тăман тухса каять. Хăранипе лаша тапса сикет те малалла ыткăнать. Илюшпа Марук, хыçалта ларса пыраканскерсем, çуна çинчен палт! тухса ÿкеççĕ те тарăн юр ăшне чăмаççĕ. Илюш аллинчи сумкине çапах вĕçертмест. Çамрăк лаша вăрманçă пÿрчĕ умне çитсен тин чарăнать.**

КУКАÇ. Фу, аран çитрĕмĕр... Ăçтан çавăрттарса сиксе тухрĕ ку çил-тăман? Ну, ачасем, анăр, пÿрте кĕрĕр, шăнтăр та пулĕ... */Каялла çаврăнса пăхать/.* Ай-яй! Пĕтрĕмĕр! Пĕри те çук! Ăçта ÿксе юлчĕçши манăн тĕпренчĕкĕмсем? Илюш! Марук! Ăçта эсир?! Мару-ук! Илю-уш!..

### ИККĔМĔШ ПАЙĔ

**Марукпа Илюш сиксе тăраççĕ те çав тери хăранипе юнашар ÿсекен лăпсăркка Чăрăш айне кĕрсе пытанаççĕ. Чăрăшпа çумăн Юман ÿсет. Йывăççем калаçнине ачасем шăпăрт, тимлĕн итлеççĕ.**

ЮМАН. Ытла та илемлĕ эсĕ, Чăрăш. Санпа пĕтĕм вăрман мухтанать.

ЧĂРĂШ. Тавтапуç, юлташăм, эсĕ вара вăйлă та тĕреклĕ. Акă паян та çил-тăман тухнă-тухман парка тураттусемпе мана хÿтĕлерĕн, хуçăлма памарăн. Тавтапуç...

ЮМАН. Кĕç-вĕç уяв çитет. Çĕнĕ çула эсĕ кăна илемлетĕн-çке-ха, Чăрăшăм... Кĕркунне, манăн çулçăсем саралса çĕре ÿкнĕ вăхăтра, эпĕ вĕсене пуçтарса хăвăла хурса хăвартăм. Унта йĕкелĕ те тăп-тулли! Акă вĕсем сана парне. Симĕс лăссусем çине сарă çулçăсем тата шăрça вырăнне йĕкелсем çаксан эсĕ татах та илемленĕн...

ЧĂРĂШ. Тавтапуç сана, Юманăм, тавтапуç...

**Юман хăйĕн çулçисемпе йĕкелĕсене Чăрăш çине сапалать. Марукпа Илюш та нумайччен чăтса лараймаççĕ, Чăрăш айĕнчен тухса сумкăран теттесене кăлараççĕ те тăрăшсах йывăçа илемлетме пикенеççĕ. Çавăнпах Пакша та васкаса çитет.**

ИЛЮШ. Эсĕ, Пакша, тархасшăн, çак çăлтăра Чăрăш тăррине лартсамччĕ.

ПАКША. Юрать, халех лартатăп.

МАРУК. Çак теттесене те çÿлерех çаксамччĕ, Пакша.

ПАКША. Юрĕ, юрĕ, халех çакатăп. Çĕнĕ çул уявне паллă тума мĕн тери илемлĕ теттесем илсе килнĕ эсир.

ЧĂРĂШ. Ах, ытла та лайăх-çке! Кун пек мана никам та нихăçан та тумлантарман. Тавтапуç сире, пĕчĕк тусăмсем. Тавтапуç сана, юман тус.

ИЛЮШ. Мĕн тери çÿллĕ эсĕ!

МАРУК. Мĕн тери хитре!

ЮМАН. Эсĕ паян чăн-чăн вăрман патши...

ПАКША. Пăхăр-ха, пăхăр, чĕрчунсем те кунталла васкаççĕ! Тилĕ, Мулкач, Чакак... Кашăкр та вĕсенчен юлмасть!..

МАРУКПА ИЛЮШ */пĕрле/.* Эпир хăратпăр Кашкăртан...

ЧĂРĂШ. Ан хăрăр. Эпĕ сире хÿтĕлĕп.

ТИЛĔ. М-м-м!.. Ах! Мĕн тери илемлĕ Чăрăш! Чăтма çук капăр! Эсĕ те, Мулкач, çаплах шутлатăн-и?

МУЛКАЧ. Çаплах. Эсĕ, Тилĕ, тĕрĕс калатăн. Теттисем тата, теттисем! Курăр-ха: йăлтăртатса кăна тăраççĕ вĕт! Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнмелле вара.

ЧАКАК. Чак-чак-чак-чак! Чак-чак! Ак кусем тата камсем?! Мĕншĕн эпĕ, Чакак, вĕсем çинчен нимĕн те пĕлместĕп? Чак-чак-чак-чак! Э?.. Чак-чак! Чак-чак!

КАШКĂР. У-у! Эпĕ вĕсене халех çисе яратăп та – ĕçĕ те пĕтнĕ! У-у-у! Хам-хам-хам!

ЧĂРĂШ. Ан хăйнă пултăр, кашаман! Асту! Кÿрентерекенсене манăн йĕппĕмсем хытах тирсе ыраттарĕç ак!

КАШКĂР */хăраса/.* Каçар, Чăрăшăм, каçар. Эпĕ, у-у, шÿтлерĕм, çавă çеç. У-у!

*/Вĕçĕ пулать/.*

# Тĕнче парнелетĕп...

Тĕпелте. Мăшăрăм уяв сĕтелĕ хатĕрлет. Пĕр вăхăтрах çĕрулми те шуратать, сухан та турать вăл.

Хĕр-хĕрарăм аллинче ĕç вĕрени тĕлĕнтерет. Вĕсем хастар та маттур пулнăранах çĕр çинче тытăнса юлман-ши арçынсем?

Чим, мĕн парнелемелле-ши юратнă мăшăрăма? Алтăр тата ытти хатĕр-хĕтĕр нумай туса патăм. Ах, тата мĕнпе усăм-ши унăн кăмăлне?

Тăхтăр-ха, йывăç эрешĕ йăлăхтарса çитермен-ши ăна? Вăл тĕрлеме, юрлама юратать. Хăй вăхăтĕнче Пуканесен театрĕнче вăй хунă. Халĕ пăхатăп та – унăн кăмăлĕ хуçăлнă пек. Те сухан татсатнăран, те пурнăçĕ ăнманран йĕрет вăл?

Мĕнпе йăпатам-ши?.. Чÿрече витĕр урамалла пăхса тăракан мăшăрăмпа киленнĕ май пуçа интереслĕ шухăш пырса кĕчĕ. Унăн куççульне курса ăна пĕтĕм тĕнчене парнелес килчĕ.

Эпĕ те пăхрăм чÿречерен. Ял та, уй-хир те курăнать. Çил-тăман вĕçтерет... Çав вăхăтра, хăть ĕненĕр, хăть ан ĕненĕр – чунăм тĕнче тавра çаврăнчĕ.

Юр кĕртне пăхса «Тундра» юрра аса илтĕм. Астăватпăр ĕнтĕ, унта хĕре çурçĕр еннелле илсе каяççĕ. Манăн вара хамăрăн пикесене кунтах хăварас килчĕ.

«Увезу тебя я в тундру...» – йĕркесене хама килĕшнĕ пек улăштарса мăшăрăмран пуçласа пĕтĕм чăваш хĕр-хĕрарăмне парнелес килчĕ çак юрра.

*Кĕвви çавах, сăмахĕсем П.Мазуркинăн*

Юратуçăм вăран-ха,
Тĕлĕк юлтăр каярах.
Йăлăнма мана ан пар-ха,
Кил-ха çума хăвăртрах.
Манса кай-ха çак кĕтесе,
Именсе ан лар.

Халь тумлан та, пуçтарăн та
Тапранар инçе çула.

*Хушса юрламалли:*
Лашин çулĕ тикĕс пулĕ
Малалла çеç ыткăнатпăр

Пурнăç тĕнчине чăматпăр,
Вĕçĕ çук унта, куран.
Сĕнтĕр, Муркаш, Токшик,
Олкаш,
Уй-вăрманĕ çаврăнатпăр,
Район аслине туятпăр–

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Парнелеп ăна сана.

Ан кала атте-аннене,
Шăв-шава ан çыхăнар.
Ан кала иртен-çÿрене,
Атя пĕрле пытанар.
Ярăнса анать шур юрĕ –
Вĕçеве чĕнет.
Тапăртатрĕ урхамахĕ
Тÿсейми пире кĕтет.

*Хушса юрламалли.*
Тăхтасамччĕ, тĕксĕм каçĕ,
Эпир тухса кайиччен.
Çынсем лăпкăн çывăраççĕ
Ĕлкĕрер куç усиччен.
Юратуçăм сиксе тăчĕ
Аллине тăсать.
Иккĕн те чунсем çуталчĕç
Таврана хĕлхем сапать.

*Хушса юрламалли:*

Лашин çулĕ тикĕс пулĕ,
Малалла çеç ыткăнатпăр,
Пурнăç тĕнчине чăматпăр,
Вĕçĕ çук унта, куран.
Калайкасси, Чурикасси,
Уй-вăрманĕ çаврăнатпăр.
Район аслине туятпăр –
Парнелеп ăна сана.

Килĕштĕр ĕнтĕ, çак сăмахсем хыççăн кам манпа юнашар утмасăр пултарĕ?

Чăваш хаçачĕпе туслă пурăннăран тавра курăм анлăланать, çавна май çĕнĕ шухăшсем çураласçĕ. Тавах вĕсене çакăншăн.

**Петр МАЗУРКИН, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, йывăç касас енĕпе Пĕтĕм Раççей конкурсĕн çĕнтерÿçи.**

## ТАКМАКСЕМ




Ана çине чечек акрăм
Те шăтать-ши, те шăтмасть?
Такмаксене эпĕ çыртăм,
Кун курать-и е курмасть?

Карçинккана тултарма
Пайтах кăмпа кирлĕ çав.
Почтальон сумккине тултарма
Пайтах хаçат кирлĕ çав.

Хитре сарă чечеке
Юратрăмăр, лартрăмăр.

# «Чăваш хĕрарăмне» юратрăмăр, çырăнтăмăр

Çак «Чăваш хĕрарăмне»
Юратрăмăр, çырăнтăмăр.

«Тĕнче тавра çÿреме
«Вăхăт таппипе» утмалла.
«Пĕлни пач пăсмасть» теме
«Темĕн те пĕр» пĕлмелле.

«Литература» та пур,
«Пурнăç ÿкерчĕкĕсем» кур!
«Эсĕ тата эп» вулам,
«Тăван ялпа» паллашам.

Хурăн çырли пиçиччен
Мĕнле çырла çием-ши?
«Чăваш хĕрарăмĕ» киличчен
Мĕнле хаçат вулам-ши?

Пирĕн ялти почтальон
Почта валеçме тухать.
Пирĕн тĕлтен иртсе кайсан
Сумкки пушансах юлать.

Çул тăваткалне çитсен
Хăш çулĕпе утам-ши?
Почтальон хаçат парсан
Хăшне савса вулам-ши?

«Тантăш», «Тетте» – ачана,
«Самант» – ăна валлиех.
«Чăваш хĕрарăмĕ» – хама,
«Тăван Атăл» та кирлех.

Сана, кайăк, лайăх-и
Хĕл кунĕнче юрлама?
Сана, чăваш, лайăх-и
Хаçатсăрах пурăнма?

Кĕнеке – ăс-тăн хуçи,
Хаçат-журнал – чун уççи,
Пурăнасчĕ туслашса
Куллен хаçат вуласа.

Почта пенси валеçет
Хаçат çырăнмаллах пуль.
Укçа пурпĕрех пĕтет,
Хаçат – кашни кун килет.

**Галина ЗОТОВА.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ.



Паллă евчĕ Роза Сябитова пурнăç тума юрăхлă мăшăр шырама вĕрентсе ăс панине кунсерен тенĕ пек куратпăр-илтетпĕр. Çапах та телейлĕ пулас тесен мĕн тумалла-ха?

# Роза СЯБИТОВА: "Упăшка шырани – ĕç ширанă пекех"



**Чи кирли – "эпĕ" çук**

**– Хамăн юлташăн ыйтăвне сирĕн пата çитерем-ха. Илемлĕ манăн пĕлĕшĕм, çамрăк, лайăх пĕлӳ илнĕ, ăнăçу çулĕпе утать. Пĕртенпĕр çитменлĕх канăçсăрлантарать ăна – хайне тивĕç упăшка тупаймасть. Мĕн тумалла?**

– Чиперуксем ытларах чухне этемлĕхĕн вăйлă çурри енчен хастарлăх кĕтсе ларaççĕ: арçынсем авалхи пекех вĕсем хыççăн чупасса шанаççĕ. Анчах та халĕ самана улшăннине манмалла мар – ăнăçуллă арçыннăн хĕр-хĕрарăм хыççăн чупма вăхăт та, пушшех те – кăмăл та çук, мĕншĕн тесен вăл çакна лайăх пĕлет: ытла нумай ыйтма хăнăхман пикесем ун хыççăн хăйсемех лавĕпе чупаççĕ. Кача пӳрнипе кăчăк туртсанах ун патне черет тăраççĕ вĕсем. Çавăнпа та ман енчен канаш – хăвăрах хастартарах пулăр. Енчен те сире чаплă арçын кирлĕ тĕк ан манăр – ăна шырасси ĕç ширанипе танах. 15-мĕш автобазăра ĕçлекен Вася килĕшет-и? Унпа тĕлпулу шыраса ăçта каймалли паллă – сăра фестивалĕнчен юлмалла мар. Бизнесмен Костя чуна çунтарать-и? Паллах, ăна хупахра тупаймăн: яхт- е гольф-клуба çырăнма лекет. Тепĕр канаш – тĕлпулăва та ĕçе кайнă пек çӳремелле, арçынсене килĕшме пĕлмелле.

**– Калама çăмăл...**

– Нимĕн кăткăсси те çук – унри арçынлăха кăна хавхалантармалла: вăл чи-чи-чи... Пур енĕпе те. Арçынпа хутшăннă чух хăв çинчен манас пулать, "эпĕ" сăмах çук санăн калаçура. Паян хĕрарăм ĕçлесшĕн мар, илесшĕн кăна. Малтан хăвăн ун валли мĕн те пулин тăвас пулать, кайран вара ыйтма та юрать. Манăн тус мĕнле качча тухнине пĕлетĕн-и? Вăл савнийĕ патне хăй хатĕрленĕ йогурт йăтатчĕ. Çакă вара арçынна питĕ килĕшетчĕ. Çапла майпа тусăм финиша пĕрремĕш çитрĕ.

Хĕр-хĕрарăмăн мĕн авалтан черех пулма тивет. Арçынну килĕшет, пур енчен те тивĕçтерет пулсан мĕншĕн ĕçлемелле мар-ха унăн? Анчах та тӳрех парăнма ан васкăр ăна, унăн та мĕн патне те пулин туртăнмалла вĕт-ха. Унпа пĕрремĕш каçах вырăн ăшăтсан эсир хăвăра пур арçынпа та çапла тыткалатăр тесе шухăшлама пултарать вăл. Илĕртме пĕлмелле арçынна. Эсир чăн-чăн хĕрарăм тăк сирĕн тавра яланах виçĕ арçынран сахал мар явăнмалла. Эпĕ пуринпе те çывăрмалла тесе каламастăп. Вĕсенчен пĕри туй кĕрекине çитеймесси паллă. Иккĕшĕн хушшинче вара суйласа хăшкăлăр. Виççĕ – шăпах аван. Вĕсенчен пĕри те пулин сире ЗАГСа илсе çитеретех.

**– Арçынна мĕншĕн каçармалла мар тесе шухăшлатăр?**

– Алă çĕклenине. Ун пек чухне тӳрех тухса каймалла. Арçын хăратăр пăртак. Тĕрĕссипе, çемьене шăпах хăрани тытса тăрать: çывăх çынна, тăвана, атте-аннене, ачасене, юратуллă хутшăнусене çухатасран хăрани. Енчен те хĕрарăм арçын хăйне хĕненине чăтса пурăнать тĕк, паллах, лешĕ нимрен те шикленмест. Вăт хĕрарăм тухса кайма, арçынна танлаштарма – арăмпа тата арăмсăр мĕнле пурăнмалла – май тупсан упăшки кăштах шухăшласа пăхатех. Йĕркеллĕ арçын арăмне киле илсе таврăнма тăрăшать. Вăт кун пек чухне вăл хăй мăшăрне юратнине сăмахпа мар, ĕçпе ĕнентертĕр! Пĕр хутчен алă çĕкленине каçарма та пулать, тен, анчах та çакă йăлана çаврăнса ан кайтăр.

**– 30-40 çулти хĕрарăм валли ытларах чухне суйланчăк кăна юлать...**

– Çаплах. Пĕрре авланса уйрăлнă арçын – уйрăм калаçу. Малтанхи арăмĕ хăварнă суран сене сиплеме тивет иккĕмĕшĕн. Çемье ахальтен арканмасть – иккĕшĕн те чунĕсем аманнă паллах. Чĕрине сиплес тесессĕн ун пек арçынпа икĕ хутчен ытларах ырăрах, çепĕçрех пулма тивет.

**Пирĕн арăмсем – чи лайăххисем!**

**– Роза, мĕнле шухăшлатăн, арăмне улталаман арçынсем пулаççĕ-и?**

– Çук. Хĕр-хĕрарăмăн çакăнпа çырлахмалли çеç юлать. Йĕркеллĕ упăшка арăмне çакна систермест кăна. Йĕркесĕрри вара ултава мăшăрĕнчен пытарма пĕлмесĕр хĕрарăм чĕрине çунтарать. Анчах та, ĕненĕр мана, ултав нихăçан та уйрăлу сăлтавне çаврăнмасть. Хĕрарăмăн чăтăм чикки пĕтет – çавă кăна.

**– Раççей хĕрарăмĕ юлашки вăхăтра ют çĕршыв арçыннипе телей тупма ăнтăлать...**

– Эпĕ çакна ырламастăп. Эпĕ – Раççей евчи, манăн хамăрăннисене пулăшмалла. Хамăр тăрăхра пултаруллă ачасем çуралмалла. Пирĕн хĕрарăмсемшĕн, паллах, нимĕнле конкуренци те хăрушă мар! Пирĕн хĕр пĕрчисем тĕнчипех пĕрремĕш вырăн йышăнаççĕ, пирĕн хĕрарăмсем кирек мĕнле арçынпа пĕр чĕлхе тупаççĕ – çапла пулма пирĕн юнри ятарлă ген пулăшать, "çынна шеллеме пĕлни" ятлă вăл. Эпир хамăр çинчен пуçĕпех манса арçынна чунпа йышăнма пултаратпăр. Вăт вырăс каччисем, шел те, тĕнчере юлашки вырăнта. Вĕсене тĕнче вырăс хĕрхĕрарăмĕпе пĕрле кăна йышăнать.

**– Качча кайман хĕрпе паллашнă чух авланнă арçынсем хăйсен арăмĕсенчен ыран-паян уйрăлассине калаççĕ. Çак юмаха ĕненмелле-и тата?**

– Итлĕр-ха, авланнă арçын вăл сирĕн мар вĕт-ха, такамăн упăшки. Апла унпа çыхланни – çылăх! Çавăнпа та ку ыйтупа калаçас та килмест манăн. Ан тĕкĕнĕр юттине! Вăл авланнине мĕнле пĕлтĕр – алă сулăр та сывпуллашăр! Уйрăлтăр малтан, таса паспорт кăтартăр, вăт ун чухне калаçма та юрать.

**– Эсир хăвăр та уйрăлнă хыççăн тепĕр çемье çавăрма васкаман...**

– Вара мĕн?! Ну, тухрăм тепĕр хут качча – мĕнпе вĕçленчĕ вăл? Эпĕ çав утăма ăнлансах тунă. Халĕ, вăхăт иртнĕ хыççăн, йăлтах вырнаçрĕ паллах. Эпĕ, чăн та, ĕмĕр вĕçне унпах çитесшĕнччĕ. Анчах шухăшланă пек пулмарĕ. Унра та арçынлăх çиеле тухрĕ – вăл телекурупкари манăн сăнарпа ăмăртма пуçларĕ. Манăн статус çӳллĕрех пулни килĕшместчĕ ăна. Асапланатчĕ вăл. Мĕнех, классика жанрĕ çĕнтерчĕ. Эпĕ вăй çитнĕ таран чăтрăм... Чи кирли – унпа пурăннă çулсене çапах та телей шутне кĕртетĕп, тăватă çул телей курса пурăннă эпĕ.

**ПУЛАТЬ ВĔТ!**

"Давай поженимся!" кăларăмăн эфирĕнче шăв-шав çĕкленнĕ... Роза Сябитова евчĕн пулăшăвĕпе усă курса 29 çулти Ольга мăшăр тупасшăн пулнă. Интеллигентсен çемйинче ӳссе çитĕннĕ хĕр Эштон Катчера аса илтерекен арçын ширанă, унăн шалăвĕн 150 пин тенкĕпе танлашмалла.

Кун пек хĕрсем асăннă программăна тăтăшах килеççĕ-ха. Анчах та Раççей евчи хальхинче урсах кайнă. Мĕншĕн тетĕр-и? Ара, тĕлĕнмелле ĕç-пуç усăмланнă кĕçех – Ольга Розăн упăшки пулнă арçыннăн савнийĕ-мĕн! Ку çитмен, вĕсем кăларăма та пĕрлех хутшăнасшăн пулнă, анчах та Юра редакци али витĕр тухайман. Юрăпа Ольга çыхăнăвĕ пирки пĕлсен Роза кăшкăрашма пуçланă, качча тухассишĕн çунакан пикене темĕн те пĕр каласа пĕтернĕ, çавна май чутах эфира хупса хуман. "Юрок туслăхĕн хакне пĕлетĕп эпĕ, – куççульне пытармасăр туйăмĕсене ирĕке янă Роза. – Вăл выртнă чух кăна – тус! Кур-ха: экс-упăшкан еркĕнĕсем килме пуçларĕç, манăн вара вĕсене çураçмалла!" – ниепле те лăпланайман хĕрарăм.

/"Аргументы и факты"/.

## КАЛАСАН ТА ĔНЕНМĔН

### Кĕтмен сиенари

Шотландири ялта "Тĕнче тавра – 80 кунра" фильм кăтартнă. Пурте экран çине сывламасăр тенĕ пек пăхса ларнă – кинори сăнарсем сывлăш аппаратĕн карçинккине кĕрсе ларма хатĕрленнĕ кăна, урамра темĕн шăтăртатни илтĕнсе кайнă. Паллах, пурте кино çинчен мансах сиксе тухнă. Çурт тăрри çине шăп та лăп экран çинчи пек сывлăш шарĕ персе аннă-мĕн! 1965 çулта пулса иртнĕ ку.

### Уйăх çинчен – салам

Америка астронавчĕ Нейл Армстронг Уйăх çине пĕрремĕш утăм тусан: "Ăнăçу сунатăп, Горски мистер!" – тенĕ.

Ача чухнех Нейл ăнсăртран кӳршисем – вĕсен хушамачĕ Горски пулнă – харкашнине илтнĕ-мĕн. "Эсĕ хĕрарăма тивĕçтериччен кӳршĕри Нейл Уйăх çине вĕçĕ!" – мăкăрлантарнă тарăхнă хĕрарăм упăшкине. Кур-ха, вăл калани пурнăçланнă вĕт – Нейл чăнах та Уйăх çине ярса пуснă!

### Икĕ çынна – пĕр шăпа

Итали королĕ I Умберго пĕррехинче Монц хулинчи пысăках мар ресторана апатланма кĕнĕ. Паллах, чаплă хăнаран саккас хуçа хăй йышăннă. Хуçана курсан король тĕлĕннипе пĕр вăхăт сăмах чĕнеймен пулса ларнă – ун умĕнче королĕн копийĕ тăнă: сăнран та, кĕлеткерен те пĕр пекех пулнă иккĕшĕ. Арçынсем калаçса кайнă та, пĕр пеклĕхсем татах та тупаннă. Король те, ресторан хуçи те пĕр кунра – 1844 çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче – çуралнă. Çитменнине – пĕр хуларах. Иккĕшĕн арăмĕсем те Маргарита ятлă. I Умберто королĕн коронаци кунĕнче уçăлнă ресторан.

Пĕр пеклĕхсем çакăнпа вĕçленмен-ха. 1900 çулта Умберто короле вăл кăмăлланă ресторан хуçи вилсе кайнине пĕлтернĕ – инкек пистолетран пенипе сыхăннă. Король хăй те хурланнипе пĕлтерсе те ĕлкĕреймен, ăна лаша кӳми тавра пуçтарăннă халăх хушшинчен такам пенĕ те вилмеллех амантнă.

### Юратнă кĕнеке

1920 çулта Америка çыравçи Энн Пэришш Парижра кĕнеке лавккине кĕрсен тахçан хăй ача чухне юратса вуланă ĕçе курнă – "Джек Фрост тата ытти историсем". Энн кĕнекене туяннă, килне таврăнсан мăшăрне кăтартнă, хăй ачалăхра ăна питĕ юратнине каланă. Арçын арăмĕн аллинчен илнĕ те кĕнекене уçкаласа пăхнă май унăн хуплашкин шал енне "Энн Пэришш, 209Н, Уэббер-стрит, Колорадо Спрингс" тесе çырнине асăрханă. Çак адреспа тахçан хĕрача çемйи пурăннă. Ку кĕнеке ача чухне шăпах Энн аллинче пулнă...

### Телейлĕ вырăн

Англири Чешир графствинчи лавккара телейлĕ вырăн пур – унти 15-мĕш кассăна черетлĕ хĕрарăм ларсанах темиçе эрне иртсен унăн çие юлни палăрать. 5 çул ĕнтĕ çапла пулса иртет. Пĕтĕмлетӳ – 25 хĕрарăм ача кĕтет. Маларахрисем вара çуратса ĕлкĕрнĕ – 30 ача. Ятарласа ирттернĕ тĕрĕслев опычĕсем те çаплах вĕçленнĕ. Шел те, çак пулăма никам та ăнлантараймасть.

### Киле...

Америка паллă актерĕ Чарлз Коглен 1899 çулта вилсе кайнă. Анчах та арçынна хăй çуралнă кĕтесре мар, çав вăхăтра гастрольте пулнă Техас штатĕнчи Галвестон хулинчех пытарнă. Çулталăкран çак хулара халиччен курман питĕ вăйлă çил-тăвăл тухнă. Чарăмни лӳшкекен çумăр урамсене те, çăвана та юхтарнă. Сывлăш кĕмелле мар хупнă тупăк та çиеле тухнă. 9 çул юхнă вăл Атлантика шывĕпе. Сахалтан та – 6000 километр. Юлашкинчен ăна Çеттуй Лаврентий кӳлмекĕнчи Эдуард принц утравĕ çинче çыран хĕррине илсе тухнă – шăпах арçын çуралнă кил умĕнче.

### Çакланнă

София хулинче чăн-чăн трагикомеди пулса иртнĕ. Милко Стоянов вăрă пуян çын çуртне ăнăçлă саратнă хыççăн мĕн тупнине кутамккине чиксе шыв пăрăхĕ тăрăх анма тĕв тунă. Никам та çӳремен урам енне тухакан чӳречерен хайхи иккĕмĕш хута чиперех çитнĕ, анчах та полицейскисем шăхăртни илтĕнсе кайнă. Ним тума аптранипе хайхи шыв пăрăхĕнчен вĕçерĕннĕ те ӳкнĕ. Çав вăхăтра аялта каччă утса пынă. Милко шăп ун çине персе аннă. Полицейскисем чупса çитсе иккĕшне те тытса чарнă. Каярахпа çакă палăрнă. Тротуарпа утса пынă каччă та вăрă иккен, ăна полици шыраса хăшкăлнă. Ку кăна та мар-ха, ăнсăртран çакланнă вăрă та Милко Стоянов ятлă пулнă.

### Телейсĕр

Ăнсăртлăх теме те çук çакна, мĕншĕн тесен ытла та тăтăшах пулса пынă – нульпе вĕçленекен çулта Америка президенчĕ пулса тăнă çынсен шăписем инкекпе вĕçленнĕ. Линкольна /1860/, Гарфилда /1880/, Маккинлие /1900/, Кеннедие /1960/ вĕлернĕ, Гаррисон /1840/ ӳпки шыçнипе, Рузвельт /1940/ полиомиелитран, Хардинг /1920/ инфарктран пурнăçран уйрăлнă. Рейгана /1980/ та тапăннă.

### Юлашки шăнкăрав

Çак пулăма историре упранмашкăн çырсах хунă. VI Павăлăн юратнă будильникĕ 55 çул ирхи 6 сехетре шăнкăртатнă. Пĕррехинче вара вăл каçхи 9 сехетре сас панă – шăп çак вăхăтра арçынăн чунĕ тухнă.

– Çурçĕр тăрăхĕнче халăхсен апат-çимĕç турри мĕн ятлă?
– Вертолет.

* * *

Арăмĕпе упăшки урама уçăлма тухнă. Арçын иртсе пыракан чиперуксене пĕр чарăнми сăнать.
– Атя, выçă сĕлекӳне юхтарах, – тет арăмĕ, – апат çиме пурпĕр килех таврăнăн.

* * *

Пирĕн асанне-кукамайăн сăнӳкерчĕкĕсен альбомĕ:
1938 – шкула кайнă /1 сăнӳкерчĕк/
1949 – шкултан вĕренсе тухнă /2 сăнӳкерчĕк/
1957 – университет дипломне алла илнĕ /1 сăнӳкерчĕк/
1962 – качча тухнă /3 сăнӳкерчĕк/
Вĕсен мăнукĕсен сăнӳкерчĕкĕсен альбомĕ:
– кафене кĕнĕ /29 сăнӳкерчĕк/
19.41 – меню илсе килнĕ /18 сăнӳкерчĕк/
19.52 – апат илсе килнĕ /41 сăнӳкерчĕк/
19.59 – туалета кайнă /123 сăнӳкерчĕк/
20.02 – туалетран тухнă май пĕлĕше тĕл пулнă /52 сăнӳкерчĕк/
20.11 – десерт илсе килнĕ /38 сăнӳкерчĕк/
20.25 – укçа тӳленĕ /12 сăнӳкерчĕк/

* * *

Пуйăсра салтак, генерал, çамрăк хĕр тата унăн амăшĕ пыраççĕ. Тоннель. Унран тухиччен такама çупса яни илтĕнет.
– Маттур! – шухăшлать хĕрарăм. – Хĕрĕм хăйне хӳтĕлеме пĕлет.
– Тĕлĕнмелле, – шухăшлать хĕр. – Эпĕ çамрăкрах ĕнтĕ, вĕсем вара анне çумне çулăхаççĕ.
– Вăт, тарăхмалла та, – шухăшлать генерал. – Çыпăçаканни салтак, мана вара униăн çупкă çитереççĕ.
– Эх, тепĕр тоннель пулинччĕ, – шухăшлать салтак, – каллех хам алла чуп тăвăттăм та генерала çисçтерсе ярăттăм...

* * *

Çак тарана пурăнса çитĕн тесе кам шухăшлама пултарнă? Апат пĕçерсе тултартăм: хĕрлĕ кăшман яшки, ăшаланă çĕрулми, какай, тăварланă хăяр кăлартăм... Вăт, пăхатăп та – темĕн çитмест: те арçын, те эрех?

* * *

Ирхине çурт стени çине тахăшĕ çырса хунă: "Пур арçын та – йĕксĕк". Кăшт вăхăтран тепри хушса хунă: "Наташа, эсĕ хăв та парне мар-ха..."

* * *

– Мĕн тăватăн?
– Этемлĕх мĕнле аталанса пынине тĕпчетĕп.
– ???
– Санăн сăнӳкерчĕкӳсене пăхатăп ара...

* * *

– Вĕри чейе хăварт сивĕтмелли меслете пĕлетĕр-и?
– Пĕр самантлăха Интернета кĕмелле. Тепре пăхнă çĕре – чей сивĕ те!

* * *

Хупах çумĕнче виççĕн пĕрне тапăннă:
– Укçа пур-и?
– Пур, – хайхискер кĕсйинчен пистолет туртса кăларать, лешсем çакна курсан тӳрех çĕре выртаççĕ. – Халĕ асфальт тăрăх шывра пек ишĕр!
Мĕн тăвас тетĕн – пăшаллă çынпа тавлашмалли çук. Аллисене суллакаласа "ишсен-ишсен" пĕри ывăнсах çитет:
– Тата мĕн чухлĕ асаплантаратăн пире? – тет. – Çапах та асфальт вĕт-ха ку: шыв мар.
– Атя-атя, иш малалла, – хуравлать чутах вăрă-хурах кулли пулманни. – Хушăп та – чăмма та тивĕ акă!

* **

**☺И-ХИ-ХИК☺**

Подъезд умĕнче яланхи пекех кинемейсем çамрăксене "кăшласа" лараççĕ.
– Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç ытла та ирĕклĕ тыткалаççĕ халĕ хăйсене: – чунранах вăрçăнать пĕри. – Эпир апла пулман. Эпĕ, сăмахран, упăшкана иккĕмĕш ача хыççăн кăна çывăха янă.

* * *

Ирхине хĕрарăм сĕтел çине упăшки валли хут татки çырса хăварать:
– Каçхине ачана садикрен кайса ил. Ан пăшăрхан, вăл сана хăех палласа илĕ.

* * *

– Харăсах икĕ арçынпа тĕл пулатăп: вĕсенчен хăшне суйласа илмеллине пĕлместĕп...
– Чĕрӳне итле – вăл мĕн калать?
– "Упăшку пĕлсен вĕлерет", – тет.

* * *

Упăшкаран ыйтатăп:
– Эсĕ апат çинĕ-и?
Вăл вара тăрăхлас шухăшпа попугай пек ман хыççăн калать:
– Эсĕ апат çинĕ-и?
– Ан тăрăхла, – тарăхатăп эпĕ.
– Ан тăрăхла, – чарăнас шухăш та çук унăн.
"Ах, эсĕ çапла-и-ха?" – мĕлтлетет пуçра. Хам вара сасăпа:
– Эпĕ сана питĕ юрататăп, çавăнпа кĕрĕк туянса паратăп, – тетĕп.
– Çинĕ эпĕ, çинĕ, – тет упăшка.

* * *

– Ăмăрткайăкăм, эсĕ мана юрататăн-и?
– Юрататăп.
– Маншăнах туртма пăрахма пултаратăн-и?
– Пăрахатăп...
– Ĕçме тата?
– Пăрахатăп...
– Шалăвна йăлтах мана парăн-и?
– Паратăп...
– Пурнăçна вара???
– Пĕр сăмахсăрах! Сана панă сăмаха йăлт пурнăçласан пурнăç пулать-и вара вăл?!

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич,** блоки. Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**24.ГРАБЛИ, косилки,** сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.КИРПИЧ** М125, М150; **керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

**814.БОЧКИ** 200 л., металлические с крышкой, хомутом. **Т. 89613429059.**

## *Саламлатпăр*



*Хаклă та юратнă мăшăра, аннене, аппана, хĕрĕме, Патăрьел районĕнчи Треньел ялĕнче пурăнакан Ирина Ивановна ТЕРЕНТЬЕВĂНА, çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.*

*Çирĕп сывлăх та хастарлăх,*
*Ĕмĕр иксĕлми вăй-хал,*
*Çут телей те савăнăç, ырлăх*
*Кăмăлтан сунатпăр халь.*

*Нихăçан вăй-хал ан чактăр,*
*Пултăр ăнăçу ялан.*
*Пурте ăшшăн саламлатпăр*
*Ыр сунса сана чунтан.*

*Мăшăрĕ, амăшĕ, хĕрĕсемте ывăлĕ, кĕрӳшĕ, аппăшĕпе шăллĕ, хăти-тăхлачи тата çывăх тăванĕсем.*

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**800.ДОМ** в любом состоянии. Т. 8-902-663-90-45.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-967-471-50-70.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8(8352) 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**745.Утепление домов ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия. Скидки. Т.380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

### ĔÇ/РАБОТА

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам, 28-83-70, 56-04-17.

## ПĔЛЕТĔР-И?

### Куç харшине кура

Çыннăн характерне куç харши тăрăх та пĕлме пулать иккен. Тӳрех вĕриленсе каякан, хăйсене тытма пултарайман çынсен куç харши кĕске те çăра. Шухăша путма юратакансен – çăра. Кун пек куç харшиллĕ хĕрарăмсем вăйлă, çине тăма пĕлеççĕ, никама та пăхăнмаççĕ, вĕсем нихăçан та кил хуçи çеç пулмаççĕ. Арçынсем вара кашни çынпа пĕр чĕлхе тупма пултараççĕ. Вăтам куç харшиллĕ çынпа хутшăнма çăмăлрах. Тухса тăракан куç харшиллĕ арçын ăслă, хĕрарăм вара – йăпălти.

### Шăршине кура

Пĕрисене пĕр шăршă килĕшет, теприсене пачах урăххи. Мĕншĕн? Нимĕç ăсчахĕсем тĕпчев иртттернĕ. Ваниль, жасмин, лили тата ытти чечеке шăршлаттарнă. Унтан юна илсе ӳт шăршишĕн яваплă генсене тĕрĕсленĕ. Пĕр шăрша килĕштернĕ çынсен ӳчĕн шăршишĕн яваплă генетика кочĕ те пĕр пек пулнă.

Çынсем духи суйланă чухне хăйсен ӳт шăршине пĕтересшĕн мар иккен, пачах тепĕр майлă. Çакăн пек вĕсем хăйсенни пек генетика кочĕллĕ çынна илĕртеççĕ иккен.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах касмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла:** 1. «Ахрат». 5. Авăрт. 8. Унтан. 9. Интер. 10. Ансат. 11. Хакас. 12. Мишка. 13. Ленин. 14. Нанду. 19. Истори. 20. Калпак. 21. Ангара. 22. Тăватă.

**Аялалла:** 1. Арифметика. 2. Ратуша. 3. Турхан. 4. Стакан. 5. Анаслу. 6. Ăмсану. 7. Тытăнчăклă. 15. Арина. 16. Дукат. 17. Вова. 18. Ялав.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

Çырăнмалли индекс: 11515

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 04.12.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 7454. Заказ 4702.